# СУНТАЛ

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН
СОЙУЗĔН ЖУРНАЛĔ

№ 7—8 1935



# „Уçнă çерем“ çинчен

## Хаваслăха çĕклентерет

М. Шолăхăвăн „Уçнă çерем“ кĕнекине вуланăçемĕн вулас килет. Вăл кĕнекене вуланă хыççăн татах та пурăнас, хастарлăнрах ĕçлес килет. Кĕнекере çырнисем чĕре патнех пырса çыпăçаççĕ.

Колхозсене организацилеме тытăннă тапхăрта клас тăшманĕ çав тери пысăк чăрмав пулса тăнă. Кулаксене пĕтерес тĕлĕшпе вирлĕ кĕрешӳ пынă. Вĕсен суйа сăмахĕсене тăрă шыв çине кăларса, чухăнсемпе вăтам хресченсене вăл сăмах суйине ĕнентерсе, колхоз организацилемеле пулнă. Анчах кулаксем чейе. Вĕсем хăйсен чейелĕхĕпе колхоза кĕрсе тĕрлĕрен сăтăрла ĕçсем туса колхозсене аркатса йарасшăн пулнă. М. Шолăхăв хăйĕн кĕнекинче колхоз строительствинчи çивчĕ клас кĕрешĕвне тĕплĕн çутатса панă. Унăн кĕнеки клас сисĕмлĕхне тата та ытларах ӳстерме чĕнет. „Уçнă çерем“ кĕнекене колхозсенче пĕрлешсе вуласан питĕ пысăк усă парать. Мĕншĕн тесен хăш-пĕр колхозсенче халĕ те сăтăрла ĕçлесе пыракансем пур-ха. Вăл кĕнекене вуласа панă хыççăн колхозниксем хăйсем те сăтăрла ĕçлесе пыракансене сисме пултараççĕ, вĕсене тăрă шыв çине кăлараççĕ.

„Уçнă çерем“ кĕнекене куçаракансем те тăрăшса куçарнă сисĕнет. Кĕнеке чăвашла та питĕ лайăх вуланать, питĕ лайăх ăнланмала. Хăш-пĕр çĕрте йăнăш сăмахсем пур, вĕсем те корректăрсенчен пулнă йăнăшсем анчах.

Пирĕн, вулакан йулташсен, Чăваш Патшалăх Издательствинчен малала та çакăн пек кĕнекесене чăвашла ытларах куçарса кăларма ыйтмала. Çакăн пек кĕнекесем вĕсем колхозсене хуçалăх йенчен çирĕплетсе пырас çĕрте питĕ пысăк усă пама пултарасса шансах тăмала.

А. Прохăрăв.

# Н. Г. ЧЕРНЫШЕВСКИ

(1828—1889)



Кăçалхи нйулĕн 24-мĕшĕнче Н. Г. Чернышевски çуралнăранпа 107 çул тулчĕ. Чернышевски вырăссен паллă публицисĕ, критикĕ. Вăл хăйĕн статйисемпе кĕнекисенче буржуала идеалисăма пĕр хĕрхенмесĕр критикленĕ, утопилĕ социалисăм идейĕсене аталантарса пынă, ку тĕлĕшпе, уйрăмăнах, унăн „Что делать“ романĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. 60—70-мĕш çулсенче пурăннă революцилĕ çамрăксем вăл романа вуласа вĕренсе пынă. Чернышевски 60-мĕш çулсенчи революцилĕ йухăма хастарлăн хутшăннă чи паллă революционерсенчен пĕри пулнă.

# Литературă кружокĕсенче

## Çитĕнсех пыратпăр

Аксу педтехникумĕнчи (Тутар р.) лит-кружок ĕçлеме пуçланăранпа çулталăк иртрĕ. Кружок хăйĕн ĕçне аван туса пырать. Е. Еллийĕв писател йертсе пынипе тухса тăракан „Хĕрлĕ хунав“ йатлă кружок журналĕнче тухакан фелйетонсемпе сăвăсем, калавсем пирĕн кружок членĕсем хăйсен пултарулăхне ӳстерсех пынине кăтартаççĕ. Кружокри чи активлă ĕçлекенсем: Моиççейĕв-Хушки, Самар Мишши, Х. Савгачĕв, В. Наумăв, С. Наумăв йулташсем. Малалли ĕçе татах та лайăхлатас тĕлĕшпе хастарлансах ĕçлетпĕр.

Литкружок членĕ Е. Абашкин.

## Паллă совет писателĕсен произведенийĕсемпе паллашатпăр.

Пирĕн Ишлейри (Ишлей р-нĕ) вăтам шкул çумĕнчи литкружокра 30 член. Кружок членĕсенчен нумайĕшĕ Фурманăв çырнă „Чапайĕв“ произведенине вуласа тухнă. Халĕхи вăхăтра М. Шолăхăвăн „Поднятая целина“ произведенине сӳтсе-йаватпăр. Литкружок кашни уйăхра икĕ хут „Çулăм“ йатлă литературă журналĕ кăларса тăрать.

Ал. Петров.

# Октăберĕн 20-мĕш çулне хатĕрленер

## ССРС-чи совет писателĕсен Сойузĕн пур организацийĕсене те

### Хисеплĕ йулташсем!

Совет влаçĕ 20 çул тултарнă кунсенче çĕршыв партии йертсе пынипе, Ленинпа Сталин йертсе пынипе утнă хăйĕн чаплă çулĕ çине çавăрăнса пăхĕ.

20 çул хушшинчи социалисăмла опăта мĕлйуншар ĕççыннисем, çамрăксен çĕнĕ сыпăкĕ ăнланса тавçăрса илни çав тери пысăк политикла воçпитаниле ĕç пулса тăрать, ку опăтра социалисăма тăвакансем кĕрешме, çĕнтерме çĕнĕ вăйсем, çĕнĕ хаваслăх, çирĕплĕх илĕç.

Сойуз организацийĕсен мĕн пур ĕçе писателсен пултарулăхĕ вăйне чаплă 20-мĕш çул çинчен произведенисем çырас çĕре мобилизацилесси пулмала, пур йенчен те вĕсене ку ĕçре пулăшса тăмала.

Пирĕн сойуз социалисăмла революцин тĕп темисене литературăра палăртса хăварассишĕн тăрать, 20-мĕш çул йачĕпе çырнă илемлĕ произведенисем пĕтĕмĕшпе илсен Совет çĕршывĕн историлĕ опăтне çителĕклĕ таран кăтартчăр.

Ку ĕçе „Икĕ пилĕкçуллăх“ коллективĕн ăнăçлă ĕçĕ питех те пулăшма пултарать.

Уйрăм çырнă произведенисем кашни хăй майĕпе пĕр пĕрлешӳлĕ идейăпа тата унпа пĕрлех рабочи класпа унăн партийĕн пуйан пултарулă ĕçĕ çав нумай томлă кĕнекере курăнтăр, тесе тунă тематикла планпа çыхăнса тăмала.

Çак шухăшпа „Икĕ пилĕкçуллăх“ редакцийĕ писателсем мĕн çинчен çырма шухăшланисене пуçтарать, вĕсене ĕçе йарать, материалсем парса, командировкăсене йарса, кирлĕ çынсемпе, кирлĕ учрежденисемпе çыхăнтарса т. ыт. те пулăшса тăрать.

Сирĕн „Икĕ пилĕкçуллăх“ тĕп редакцийĕпе пит çывăх çыхăнса тăрса, ăна ĕçре çителĕклĕ таран пулăшса пымала, вăл ĕçе писателсене активлă хутшăнтарса ĕçлемеле, ку ĕçшĕн ответлă пулма Сойуз правлени членĕсенчен пĕрне уйăрса хумала.

Нумай томлă кĕнекене çырнă çĕре пур республиксенчи писателсем те хутшăнаççĕ, ку ĕçе кирлĕ таран йĕркелĕ, сарлакан организацилени кирлĕ.

Уйрăмах пирĕн Сойузăн пур организацийĕсен те, пур членĕсен те Октăбер хыççăнхи фольклора, художĕствăлă промысласен експоначĕсене-тĕслĕхĕсене пухассине организацилемеле, вĕсем уйрăм томпа тухмала.

Фольклорис специалиссен, пур писателсен те халех çав материалсене пухса „Икĕ пилĕкçуллăх“ редакцине (Москва,. ул. Горького, 15) йамала, редакцине ку ĕç мĕнле пыни çинчен пĕлтерсех тăмала.

Татах палăртса калатпăр, „Икĕ пилĕкçуллăх“ коллективĕн ĕçне Сойуз правленийĕ питех те пысăк вырăна хурать. Кăна ес ĕр те çителĕклĕ хак хурса хăвăра кирлĕ вывăдсем тăвассине шансах тăратпăр.

Ку тĕлĕшпе мĕн-мĕн тума пуçлани çинчен Сойуз правленине пĕлтерĕр.

ССРС-чи Писателсен Сойузĕн Правлени Председателĕ
М. ГОРЬКИ.

ССПС-ĕн Правлени çекретарĕ
А. ЩЕРБАКОВ.

Обложкă çинче: *Çмирновă Йелизаветă. „Сатурн“ колхозри (Кĕçĕнйелчĕк р-нĕ) чи лайăх кĕлте çыхакан ударницă-комсомолкă.*

*Вунпĕрĕмĕш çул тухат.*

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# СУНТАЛ

Чăваш совет писатĕлĕсен Сойузĕн уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литературă, критикă тата искусствă журналĕ.

№ 7—8(123—124)1935 | РЕДАКЦИ АДРĔСĔ: г. Чебоксары, Чувашская АССР, ул. Володарского, Дом печати, редакция журнала „Сунтал". | ИЙУЉ—АВГУСТ

## СОВЕТ ПИСАТĔЛĔСЕН ПУЛТАРУЛĂ ĔÇĔШĔН

*(П. П. Постышĕв йулташ Украинăри совет Писатĕлĕсен Сойузĕн правлени пленумĕнче тухса каланинчен)*

Сталин йулташ писатĕлсене «етем чунĕсен инженерĕсем», тесе йат пачĕ, ку питĕ хисеплĕ, çавăнпа пĕрлех питех те ответлă йат. Вăл ĕнтĕ парти, çĕршыв сирĕнтен классăр социалисăмла обшчĕствăн чăн-чăн çыннине вĕрентсе ўстерме, кирлĕ пек воспитани пама пултаракан произведенисем ыйтнине пĕлтерет. Сирĕн парăм, Украинри совет писатĕлĕсен парăмĕ—сирĕнтен мĕн кĕтнине, мĕн шанса ыйтнине парасси.

Епĕ Гейне каланине аса илтерес тетĕп:

«Гений платит чистоганом...
Шиллер, Гете, Лессинг, Виланд
Не любили жить в кредит.
Не искали в долг оваций,
Не морочили народ,
Чтобы он венком лавровым
Их увенчивал вперед».

Малтанах, вăхăтсăрах лавр пуç кăшăлне тăхăнтарса чапа хурса хисеплени кирлĕ мар, анчах çав хисепе илес шанчăка та çухатма йурамаст̆.

«Етем чунĕсен инженерĕсем»! Ку, йулташсем, мухтавлăн илтĕнет. Вăл сире пит çўле çĕклет. Анчах вăл, каллех калатăп, сирĕн çине питĕ пысăк ответлăх, пысăк ĕç хурат̆.

Епĕр Октябĕр революцийĕн 20-мĕш çулне çывхаратпăр. Çак çулсенче совет çыннин «чунĕнче» сахал улшăнусем пулчĕç-ши? Ытла та пысăк улшăнусем! Сахал-и мĕн халь хи вăхăтра, хăйсен «чунĕпе» çĕнĕ, чăн-чăн социалисăмла совет çыннисем? Сахал-и вара пирĕн аслă самана çуратнă çĕнĕ паха сисĕмсем, ăстăнри улшăнусем? Сирĕн çаксене илемлĕ обрăзсенче кăтартма вăхăт та çитнĕ ĕнтĕ.

Илер-ха, сăмахран, совет çынпин «чунĕнчи» çĕнĕлĕхе, вăл пултарулăхла ĕçе туртăннине. Пирĕн çĕршыва килекенсене пурне те, хăт̆ тăшмансем йенчен килнĕскерсем пулччăр вĕсем, пирĕн çĕршыври мĕлйуншар ĕççынни çав пултарулăхлă ĕçе, çĕнĕрен тăвас ĕçе, çĕнĕ, çутă пурнăçшăн кĕрешме хĕрўллĕн туртăнни шалтах тĕлĕнтерсе йарат̆.

Етем историнче малтанхи хут мĕлйуншар ĕççыннисен массисем пусмăрлăхран, експлоатацирен, пĕксĕр ĕçрен, çынсемшĕн, капиталистсемпе помешчиксемшĕн ĕçлесинчен хăтăлса, хăйсемшĕн ĕçлеме пуçларĕç, хăйсен социалисăмла обшчĕствишĕн ĕçлеççĕ. Етем историнче малтанхи хут мĕлйуншар ĕçхалăх массисем наукă, культурă патне сарлака çул уçрĕç. Етем историнче малтанхи хут мĕлйуншар ĕçхалăх массисем социалисăмла коллективла ĕç йăвăр çĕклем мар иккенне, пултарулăхпа çĕнĕрен çĕнĕ пуйанлăх туса савăнни иккенне туйса илчĕç.

Илер-ха, социалисăмла ăмăртăва—ку массăлă пултарулăх хăватлăн палăрса тăни мар-им мĕн? Ленинпа Сталин йертсе пыракан парти çулĕпе утакан массăсем мар-и вара пирĕн çĕршыв питне улăштарчĕç, ĕлĕкхи Раççей империнчен тĕнчери чи малти вырăнта тăракан çĕршыв туса хучĕç? А пирĕн комсомоли, пионери, ача-пăчасем—ку хаваслăх сирпĕтсе тăракан пултарулă активлăхпа енерги чечеклĕхĕ!

Илĕр-ха, Сойузри халăхсен революци хыççăн çуратнă йуррисене, массăлă ўкерў искусствин выстăвкисенче пулса курăр-ха, халăх пултарулăхĕн олимпиадисенче, пирĕн стадионсенче пулса курăр-ха—пур çĕрте те массă пултарулăхĕ сарлакан ўснине куратăр. Çапла пурăнаççĕ, çапла тăваççĕ, çапла йурлаççĕ, çапла пултараççĕ пирĕн аслă совет çĕршывĕн ирĕке тухнă халăхсем.

Пултарулăх ĕçне туртăнни вăл—совет çынниш «чунĕнчи» çĕнĕ улшăну, кăтартса пани-ха епĕр ăна илемлĕ литературăра? Çук, кăтартман. Есĕр—етем чунĕн инженерĕсем, сирĕн кăтартмала, есĕр кăтартма тивĕçлĕ çав социалисăмла çĕршыв çыннин чунĕнчи çĕнĕлĕхе мĕнпур илемлĕхĕпе, мĕнпур вăйĕпе.

Илер-ха малала совет çыннин чунĕнчи тепĕр уйрăмлăха, унăн хăй сисĕмĕн çак уйрăмлăхне—хăйне тивĕçлĕ хисепе хуни, хăйне тата унпа пĕрле пĕр социалисăм ĕçне тăвакан ытти çынсене хисеплесси ўссех пынине.

Ĕмĕрсем хушши çурăмне авнă хресчен, улпут иртсе кайассине кĕтсе сехетсем хушши çара пуççăн тăракан хресчен, хăй çурăмĕ çинче помешчик хулли шăхăрнине чăтнă хресчен, кулак-йунĕмен пĕкĕлле авкаланă хресчен—халь вăл коллективлă ĕçре хутшăнса ĕçлекен çын. Вăл хуçа, вăл ĕççыннисен ытла та пысăк йышĕн пĕр ушкăнлă ĕçне тăват̆, вăл культурăлăх тĕлĕшпе ўсет, вăл хăй ĕçĕпе мухтанат̆, вăл малала, культурă патне, пĕлўсем патне туртăнат̆.

Халĕ, колхозник, унăн колхозĕ малта пулмасан, йе ĕçлекенсемпе хресченсен патшалăхĕ умĕнчи парăмсене парса татман пулсан, унăн колхозĕнче тырпулă тухăçĕ кўршĕри колхозсенчен начартарах пулсан,—хăйне хăй намăса хурат̆, вăл тăнлă, вăл пирĕн обшчĕствăн тивĕçлĕ, хисеплĕ çынни иккенне ăнланса тăрат̆. Унăн тивĕçне хĕстерме, хисепне ўкерме пăхнине тўсеймест.

Иртнине, уйрăмах рабочи поçолăксен, хуласен иртнĕ пурăнăçне епĕ начарах пĕлместĕп. Акă, сире иртнĕ пурнăçри пĕчĕк ўкерчĕксенчен пĕри. Иваново-Вознесенск. Йыш, пилĕк ача. Пăлхавçă ашшĕне катăргăна кайса чикнĕ, амăшĕ—ткачихă нушапа асапланат̆, пур ачисене те тивĕçтĕр тесе, çăкрине виçсе валеçет. Вырсарни кунсенче çеç ачисем шурă çăкăр кураççĕ. Çăкрине амăшĕ кĕлмĕçленсе пурăнакансенчен илет, вĕсен çăкри йўпĕрех. Çич çулхи ывăл ачи темле йывăр чирлесе ўкнĕ. Амăшĕ ун пирки ирхине ĕçе вăхăтра çитеймен. Вăл ĕçе кайа йулнине курат̆, йулсан саватран кăларса пăрахаççĕ. Ва-

ра йышěпех пěтмеле пулаť. Унпа пěрлех вăл ачи вилме пуçлапине кураť. Акă, асăрхаттарса малтанхи гудок илтěнет, иккěмěш гудок, вунă минут йулчě. Вăл вилме пуçланă ачин вырăнě çине, çěтěк-çатăксем çине пăхаť; унта ытти тăват ачи йăшалапаççě, акă, йулашки гудок, хаpрăк ěçлеме пуçларě. Вăл тăхăр çулхи аслă хěрачине вăратаť те, чирлě ачи умне лартса хăвараť: акă çăкăр, акă шыв, асту шăллуна, тет. Хăй хапрăка васкаť, тен ěлкěрě те. Пыраť,—унăн станокě çинче урăххи ěçлет, кам кайа йулакансен вырăнне ěçлесе çеç пурăнаť ку та. Иккěшě те станок умěнче хирěç пулаççě, иккěшě те чухăн, йывăр нушара. Амăшě табелшчик патне кайаť, лешě ăна управљайушчи патне йараť, управљайушчи рашчут парса хапрăкран кăларса ывăтаť. Вăл 1 т. 70 пус илчě те килеле утрě. Хăйусăрăн алăка уçаť—хěрачи шăллěн кăкри çинче çывăрса кайнă, шăллě вилнě.

Акă сире рабочи йышěн иртнě пурнăçě. Шевченко, Некрасăвăн хурлăхлă йуррисене аса илěр-ха, хěсěрлесе пусмăрласа çитернě мужикěн йăнăшнă йуррисене. Ăна кашни утăмрах хěсěрленě, станувуйсем, уретниксем, хупахçăсем, усламçăсем, чăпăрккапа нухалља ăстисем, шăлçěмěренсем упран мăшкăланă. Шевченко çырнă «Кавказ» сăвва аса илěр-ха:

> „Нам тільки плакать, плакать, плакать
> і хліб насущний замісить
> Кровавим потом і сльозами...
> А сльоз! А крови! Напоїть
> Всіх імператорів би стало,
> З дітьми і внуками втопить...“

Акă сире йалăн иртнě пурнăçě, пусмăрти Украинă йалěн пурнăçě, таплаштарса пăхăр-ха ăна пирěн йалпа, социализмла Совет Украинин йалěпе таплаштарса пăхăр. Нумай йăварлăхсем, çитменлěхсем пулнă-ха çав вăхăтран, ун чухне йěрес те йěрес кăна килнě, анчах йěрме мар, çапăçма, кěрешме çеç кирлě пулнă ун чухне.

Мужик çук! Пур социализм ěççыннě. Унпăн пěлÿсем патне, кулјтурă патне, патшалăха йертсе пырас ěçе хутшăнма пур çулсем те уçă. Çав çын ěнтě, хăйне тивěçпе хисеплес сисěмěпе тулнинчен, çěнě йěркешěн кěрешнě çěрте вăл та кирлě вырăн йышăнса тăнине ăнланнипе хăйне, хăй çыннисене хисепленинчен тěлěнмеле-ши?

Пирěн çěнě çынăн ăспуçěнчи çав çěнěлěхе кирлě таран çителěклě кăтартнă-ши вара пирěн писателсем?

Çук, кăтартман!

Илěр-ха малала совет çыннин «чунěнчи» тепěр çěнěлěхе, советла патриотисăма, вăл социалисăмлă тăван çěршывне йуратнине. Совет Сойузěн çынни хăйне çěрěн пěр улттăмěш пайěн хуçи вырăнне хураť. Вăл хăйěн тăван çěршывěн улшăннă сăн-питне кураť, хăй аллипе тунă хуласене, савăтсене кураť, колхоз уйхирěсен-йăрансăр, чикěсěр ирěклěхне кураť те калаť:

— Пурте кусем пирěн, манăн мěне савмали, мěне сыхламали пур. Епě патша Мускавне кураймастăмччě, мěншěн тесен мана вăл сăнчăрланă, мěншěн тесен кивě Мускав—вăл мěлйуншар ěççынни палачěсен хули. Çав сăлтавпах епě кивě Кийěва та кураймап. Халě епě иккěшне те йуратăтăп, мěншěн тесен вěсем пирěн.

Тăван çěршыв йатне каласа пирěн инженерсем, техниксем, Сойузри шахтăсенче, савăтсенче, пирěн артиссем тěнчери кон-

## Уйав кунěсем Шупашкарта



Çамрăк ăру автономи уйавěнче

*Христофорăв фото-ÿкерчěкě*

## Уйав кунӗсем Шупашкарта



Трибунӑ ҫинче: Парти Чӑваш Обкомӗн отв. ҫекретарӗ Ҫ. П. Петров, Чӑваш Тӗпӗҫтӑвком председателӗ А. Н. Никитин, Горьки Крайӗҫтӑвком председателӗ Йу. Каганович.

*Христофорӑв фото-ӳкерчӗкӗ*

---

курссенче, пирӗн шахматиссем тӗнчери турнирсенче, пирӗн спортсменсем капиталисла хуласен стадионӗсем ҫинче ҫӗнтереҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв йатне каласа Ленин-Сталин партийӗн сарлака йалавӗ айӗнче Совет Сойузӗн халӑхӗсем, кирлӗ пулсассӑн, ҫапӑҫӑва тухӗҫ, урса кайнӑ тӑшмана ӑспуҫлӑ, паттӑр, хӑйсен тӑван ҫӗршывне чикӗсӗр парӑннӑ совет патриочӗсем мӗн тума пултарнине кӑтартӗҫ.

Паллӑ мар-и-ха ӗнтӗ, совет патриотисӑмӗн темине пирӗн чи аван сӑмах ӑстисен мӗн пур вӑйӗпе илемлӗхӗпе кӑтартма кирли? Паллӑ мар-и-ха, советла патриотисӑм ҫинчен кӗнеке кӑларасси Украинри писатӗлсен коллективӗн чи хисеплӗ ӗҫ иккенни?

Епӗ сирӗн умра совет ҫыннин «чунӗнчи» пур ҫӗнӗлӗхсене те тӗплӗн кӑтартатӑп тейесшӗн мар. Епӗ кӗскен ҫеҫ ҫав виҫӗ паллӑ ҫӗнӗ паха сисӗмсем ҫинче чарӑнса тӑтӑм,—пултарулӑх сисӗмӗ, хӑйне тивӗҫпе хисеплес сисӗм, социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыва йуратнӑ сисӗм ҫинче. Кирлӗ-ши сире пирӗн совет ҫынни «чунӗ» халех пуйан, ҫутӑрах, пахараххи ҫинчен, тата ҫав виҫӗ йенӗпех ӑна кӑтартса пӗтерес ҫукки ҫинчен калани? Социалисӑмла коллектив умӗнче пысӑк ответлӑха туйни, интернационалисӑм сисӗмӗ, хӗрарӑм ҫине ҫӗнӗле пӑхни, ӑрусем хушшинчи ҫӗнӗле хутшӑну—кусем пурте илемлӗ литературӑра кӑтартасса кӗтеҫҫӗ.

Кӑтартасса ҫеҫ те мар, формӑлассине кӗтеҫҫӗ. Пирӗн ҫынсен ӑстӑнӗнче капиталисӑм йулашкийӗсем те нумайха, унӑн йулашкисене ҫӗнтерсе пыратпӑр, анчах вӗсем ҫапах та пур. Илемлӗ литературӑ, етем чунӗсен инженерӗсен ҫав иртнин йулашкисене тӗппех пӗтерессишӗн, социалисӑмлӑ обшчӗствӑ ҫынниш пур йенчен те паха ҫӗнӗ чунне формӑлассишӗн кӗрешекенсен малти ӗретӗнче пулмала.

### Социалисӑмлӑ чӑнлӑх, принциплӑх тата чӗререн ҫырни

Ҫакӑнпа пӗрлех епӗ тата писатӗл типӗ ҫинче, вӑл тишшӑн пирӗн пурин те пӗрле кӗрешмеле,—тата писатӗлрен, унӑн пултарулӑхӗнчен халӗ мӗн ыйтмали ҫинче чарӑнса тӑрасшӑн. Ҫӗнӗ ҫын, унӑн идеалӗсемпе ӗмӗчӗсем, унӑн пултарулӑх пафосӗ ҫав тери ӳсние кӑтартас пулсан, хаљхи ҫынна унӑн чаплӑ ыранне кӑтартас тесен, чӑн-чӑнах та



Долбилăв полевод Йетĕрнери „XVII партсйес“ промколхозăн уйĕнче

(*Зверĕв фото-ӳкерчĕкĕ*)

---

«чун инженерĕ» пулма кирлĕ. Писатĕлре хăйĕнче пирĕн саманари малта пыракан çынсен чи паха сисĕмĕсемпе туртăмĕсем пулмала.

Мĕн-мĕн ыйтмала-ха пирĕн хаљ писатĕлрен тата унăн пултарулăхĕнчен?

Малтанхи, тата татса параканни вăл,—пултарулăхра çӳлĕ идейлăх, принциплăх пулни. Пире халĕ сарлака декларацисем тата тĕрлĕрен чаплă ĕçсем пирки паракан выступленисем кирлĕ мар. Пире есĕр кашни черетлĕ кампанисем пирки, хаçатри кашни умсăмах çине хăвăрт пиçнĕ йапаласемпе сасă пани кирлĕ мар. Пире пысăк илемлĕ, анлă йапаласем кирлĕ, пысăк идейлăхпа тулли илемлĕ литературă кирлĕ.

Ăна, писатĕл хăй, идейлăхăн, принциплăхăн пысăк çӳлĕшĕнче тăмасан, кирлĕ политикла тавра курăмĕ пулмасан тума çук. Унсăр писатĕл хаљхи çынăн хăйне тыткалассин шалти сăлтавĕсене те, тулти сăлтавĕсене те ăнланма пултараймаст. Унсăр писатĕл çĕнĕ çынăн сисĕмĕсен ăшне, пултарулăх пафосĕ ăшне кĕреймест. Унсăрăн писатĕл аван пулсан та хăй произведенинчи герой ĕçĕсен уйрăм фактисене çеç çырса кăтартĕ, çав геройăн характĕрне, унăн психикине, унăн ăстăнне уçса кăтартма пултараймаст.

Иккĕмĕшĕ—пире социалисăмла чăнлăх, чĕререн çырни, тӳрĕлĕх произведенисенче те писатĕлĕн мораљљĕ сăн-питĕнче те пулни кирлĕ. Социалисăмла чăнлăх вăл—пирĕн чăнлăх. Литературăри приспособленчĕствăпа, йураслăхпа татăклăн кĕрешмеле—ку пирĕн кирлĕ задачă.

Епĕр халĕ Украинри халăх сăмахĕ каланă тăрăх «кам урапи çинче ларан, çавăн йуррине йурлан» тенĕ шухăшпа çырнă произведенисемпе килĕшме пултараймастпăр, пире пултарулăхра социалисăмла чăнлăх, тӳрĕлĕх кирлĕ.

Пулмаст-и-ха çапла: театăрта ларатăн та пĕр-пĕр пйесăна пăхатăн. Пурте унта хăй вырăнĕнче пек: пилĕкçуллăх та, Днепрогес та, Донбасс та, завком та пур, вредитĕле те, кулака та кăтартнă. Финал та социалисăмшăн пекех. Чĕлхи те начар мар пек. Пйесси çапах та хумхантармаст, суйа йанăрат, чĕререн çырни сисĕнмест. Пурне те кирлĕ пек лартса тухнă, пропорцине те тытса пынă—хумхантармаст, автăр чĕререн çырнине сисместĕн, рашчут, хăш-чухне... хозрасчут пурри сисĕнет.

Апла пулсан, иккĕмĕшĕ епĕр писатĕлрен мĕн ыйтни вăл—социалисăмла чăнлăха ыйтни, пултарулăхра чĕререн ĕçленине ыйтни пулат.

Хăвпа хăв ĕçлени, хăвăн куљтурлăха çӳлерех çĕклени, художествăлă ăсталăха ӳстерни—виççĕмĕшĕ. Акă мĕн ыйтатпăр епĕр писатĕлрен. Пĕр писатĕлĕн те сирĕн продукци пахалăхĕ пирки скидкă парĕç тесе кĕтме çук.

Пирĕн писатĕл ремесленник—алăсти пулмала мар. Хăвăрт иртекен çăмăл çĕнтерӳсемпе çеç савăнса çырлахма кирлĕ мар. Пирĕн писатĕл пĕтĕм ăрусене ваљљи пирĕн аслă саманан памĕтникĕсене туса хăварма тăрăшакан чăн-чăн художник пулмала.

Пирĕн, йулташсем, камран пример илмели, кам çине пăхса ĕçлемели пур. Епĕ Алексей Максимăвича асра тытатăп. Есĕр манран начар пĕлместĕр, Алексей Максимăвич писатĕл пулса аталанасси пирĕн писатĕлсене туса панă условисенчен инçе уйрăм, урăх условисенче пулса пынă. Хăйĕн курпунĕпе вăл тĕнче арени çине, тĕнче литературин малти ретне тухса тăчĕ. Етемлĕх куљтурин пĕтĕм пуйанлăхне хăй ăшне сăрхăнтарса илсе, критиклесе йышăнса алла çавăрса илнĕ вăл. Çав тери сарлака сарăмлă интерессем. Сарлакан курни. Хăйĕн художествăлă ăсталăхне хăпартас тĕлĕшпе куллен тăтăшах ĕçлени. Çапла пулмала чăн-чăн пултаруçăн, çын чунĕсен чăн-чăн инженерĕн.

Тата, йулашкинчен, манăн сире ак çакна асăрхаттарса хăварас килет,—вăл сирĕн хушăра чăн-чăн йулташлăха тивĕç коллективисăм туни. Епĕ кунта коллективисăм çинчен калаçасшăн, ĕçри бригадăлă метод çинчен мар. Епĕ хушăри хутшăну çинчен, пĕр-пĕринпе, уйрăмах ӳсекен çамрăк кадăрсемпе чăн-чăн йулташла хутшăнса ĕçлеме май паракан коллективисăм çинчен каласшăн.

Есĕр пирĕн совет çыннин социалисăмла çĕнĕ чунне аталантарма чĕннĕскерсем. Сахал-ши-ха сирĕн хăвăр чунсенче, сирĕн хутшăнусенче киввин йулашкийĕсем? Çапла пулмаст-и-ха: писатĕл аван пйесă çырнă, йе повĕç, каламала, пурин те савăнмала çеç, ку ĕç пĕтĕм писатĕлсен коллективĕн ӳсĕмĕçке-ха! Çук—хăшĕсем шăмараççĕ, кĕвĕçеççĕ.

Паллах, ку сисĕмсем индивидуалисăмпа егоисăм йулашкийĕсем, вĕткĕвĕçӳллĕн хăвна йуратни, ăмсану йулашкисем, вĕсем çынсен социалисăмла чунĕсен инженерĕсене килĕшмеççĕ.

Чăн-чăн коллективисăм, чăн-чăн йулташла хутшăнусем пулни сирĕн хушăра—акă тăваттăмĕш ыйту, çакна епĕр те, есĕр те ыйтмала, çакăншăн епĕр пурте пĕрле çапăçмала.

Кĕскен каласан писатĕл етемлĕхĕн, пирĕн парти, аслă Сталин çĕклекен чи малти идеалĕсене пурнăçа кĕртессишĕн чăн-чăн кĕрешекен çын пулмала.

Сирĕн пултарулăх ĕçне ваљљи çав тери аван вăхăт хаљ. Çирĕп утăмсемпе Украинри, пĕтĕм Совет Сойузĕнчи пур халăхсен литературисен пĕр интернационалă фрончĕпе чăн-чăнах пысăк совет литературин пултарулăхĕшĕн кĕрешĕр!

# ФРИДРИХ ЕНГĔЛС

*(Вилни 40 çул тултарнă майĕпе)*

Фридрих Енгĕлс, Маркс йулташĕ, пролетариатăн аслă çулпуçĕ, вут-хĕм вăйĕлĕ учитĕлĕ вилнĕрен вара хĕрĕх çул тулчĕ. Тăхăрвун çул ытла иртрĕ Маркспа Енгĕлс ĕççыннине, пусмăра пĕтерсе, ирĕклĕ саманана тухма çул кăтартакан йалава паттăрăн çĕкленĕ вăхăтран вара. Аллă çул хушши ытла Маркспа Енгĕлс алла пĕр чĕтретмесĕр пролетариатăн çăлăнăç йалавне йăтса пынă. Маркспа Енгĕлс вилсен çав йалавах Ленин тытса пынипе Раççейри ĕççынни патшалăха хăй аллине туртса илсе, классемсĕр обшчĕства пыма çул уçрĕ. Çав йалавах Ленин хыççăн Сталин тытса пынипе Совет Сойузĕнчи пролетариатпа ĕççынни классемсĕр обшчĕствăн никĕсне хыврĕ, пусмăр тымарне кăкласа тăкрĕ. Хамăр çĕршыв социалисăм тапхăрне кĕни, çынна пусмăрласа пурăннă классене аркатса тăкни, ĕлĕкрех ĕмĕтре те пулма пултарайман аслă строителствă, мĕлйун-мĕлйун ĕççынни историйе творчествăла туса пырас ĕçе хутшăнса пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерекен пысăк активлăхпа кĕрешни—çавсем пурте Маркспа Енгĕлс йачĕсемпе çыхăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем—çав аслă ĕçсен аслă пуçарулăхçисем. Çав аслă ĕçсем—чăн-чăн вĕсене тивĕçлĕ памĕтниксем. Вĕсен вĕрентĕвĕ, ыттисенни пек, кивелнĕ хĕçпăшалсен историле музейĕнче мар, вĕсен вĕрентĕвĕ—пирĕнпе, пирĕн ĕçхĕлре, пирĕн кĕрешўре. Аслă ĕçсемшĕн тав туса анчах мар асăнатпăр епĕр вĕсене. Вĕсен вĕрентĕвĕ вĕçĕмсĕр малалăхăн çулне ĕмĕрсем хушши кăтартса тăрĕ. Вĕсен вĕрентĕвĕ—çўлерехри сыпăка хăпарма вăй паракан çăлкуçĕ. Çавăнпа—вĕсен вĕрентĕвĕ йалан пирĕн куç умĕнче.

Пĕтĕм обшчĕствăн çулне, малалăхне кăтартса парас пулсан, пĕтĕм тĕнче малала аталанса пынин саккунĕсене ăнлантарса памала пулнă. Маркспа Енгĕлс çырнисене пăхса тухсан, пĕтĕмпех тĕлĕнсе каймала: вунтăххăрмĕш ĕмĕрте пулса иртнĕ паллăрах ĕçсем пĕри те вĕсен кĕнекисенче, вĕсен ĕçхĕлĕнче палăрăнмасăр йулман, татах та, вунтăххăрмĕш ĕмĕрте аталанса пынă паллăрах наукăсенчен пĕри те вĕсенчен айакран иртсе кайман. Диалектикăлă материалисăм, историлĕ материалисăм, çутçанталăк диалектики, тĕрлĕ вăхăтсен историйĕ, политекономи, математикă, физикă, механикă, хими, биологи... мĕн-мĕн çинчен кăна татăклă кăтартусем парса хăварман вĕсем! Ахаљтен мар пулĕ çутçанталăк çинчен—обшчĕствă çинченне асăнмастпăр та, вăл хăйне хăйех курăнса тăрать—вĕрентекен наукăсенчи учонăйсем йулашки çулсенче Маркспа Енгĕлс каласа хăварнисене тимлĕн вĕренеççĕ. Ахаљтен килмен пулĕ пĕр наукă та марксисăма тапратмасăр иртсе кайманни. Çавăн пекех литературă ĕçĕ те. Литератăрсем те—ыттисем пекех—Маркспа Енгĕлс çырнисенче пĕтĕмĕшле вĕрентў, философиле вĕрентў анчах мар, конкретлă ыйтусене çутатса панисене те нумай тупаççĕ.

Анчах, хăшне те пулин, марксисăмăн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвне-и йе уйрăм конкретлă кăтартувĕсене-и, епĕр тĕплĕнех вĕренетпĕр, тесе калама пултараймастпăр. Пирĕн чăваш писатĕлĕсем вĕсене тĕплĕн вĕренме кирлине пĕтĕмпех ăнланса илнĕ теме те пултараймастпăр-ха. Пирĕн умри тĕп задачăсенчен пĕри, вăл—хамăра теори тĕлĕшĕпе пиçĕхтересси, марксисăма вĕренесси, марксисăмăн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвне ăнланса илсе, унпа пĕрле, унпа çыхăнтарса уйрăм кăтартусене тĕплĕн вĕренесси. Унсăр анлă та тарăн литературă тăвасси—шанчăклă ĕç мар. Çакăнпа пĕрлех, Маркспа Енгĕлс литературă çинчен каласа хăварнисене чăвашла куçарса вĕсемпе массăсене паллаштарасси, вĕсене ăнлантарса парасси—черетри пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăмала.



Маркспа Енгĕлс литературăпа искусствă çинчен каласа панисем питех те нумай. Маркспа Енгĕлс пурнăçĕсен кирек хăш тапхăрне илсен те, вĕсем йаланах искусствă ĕçĕпе интересленнине куратпăр. Çамрăк чух вĕсем иккĕшĕ те сăвăсем çырнă. Вĕсем кашни произведенире тепĕ пекех искусствă ыйтăвĕсене тапратса, хăйсен шухăшĕсене каласа хăварнă. Тата Енгĕлс пысăк пйесă та çырнă, ăна 1847 çулта театăрта та лартнă. Маркс та виличчен пĕрех драмă çырасса ĕмĕтленнĕ—Римри Гракхсен кĕрешĕвĕ çинчен, анчах, вăхăт çуккипе çырайман. Çак фактсем Маркспа Енгĕлс искусствăпа литературăпа йаланах çывăх тăнине кăтартаççĕ. Вĕсем искусствăпа литературă çинчен мĕн-мĕн каланине ăнлантарса парас пулсан, темĕн чухлĕ кĕнеке çырас пулать. Кунта епĕр Фридрих Енгĕлсăн хăш-пĕр кăтартăвĕсем çинчен, пирĕн пайанхи ĕçпĕн те практикăла кăтарту пулса тăраканнисем çинчен кĕскен асăнасшăн. Ку тĕлĕшпе Фридрих Енгĕлсăн Лассаљ, Гаркнĕс, Минна Каутскайа тата Пауљ Ернст патне йанă çырăвĕсем мала тухса тăраççĕ.

Тăвата çырăвне илсен те Енгĕлс р е а л и с ă м ш ă н кĕрешнине куратпăр. Реалисăмшăн кĕрешнĕ вăхăтра Енгĕлс реалисăм мĕнне те ăнлантарса парать. Енгĕлс калани хăй вăйне хаљ те çухатман, ытларах та, çухатман анчах мар, халĕ, совет литератури социалисăмла реалисăмшăн кĕрешнĕ вăхăтра, вăл пирĕн умма пĕтĕм хăйĕн вăйĕпе, пĕтĕм хăйĕн тарăнăшĕпе тухса тăрать. «Манн шутпала, р е а л и с ă м, уйрăм йенсене чăнла кăтартнисĕр пуçне, т и п л ă  х а р а к т ĕ р с е н е  т и п л ă  ĕ ç х ĕ л п е  с ă л т а в с е н  т а в р а л ă х н е тăратса тĕрĕс кăтартса парассине пĕлтерет»,—тет Енгĕлс М. Гаркнĕс патне йанă çырура.—Чăваш совет литературин тĕп çитменлĕхĕ мĕн вăл? Чăваш совет литератури кайа йулни чăн малтан мĕнрен

тупма пултарнă çĕрте кăна курнине, ăна епĕ реалисăмăн пит те пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри вырăнне, Бальзак старикĕн пит те чаплă, ăна çеç тивĕçлĕ йенсенчен пĕри вырăнне шутлатăп.

Лондăнри Ист-Ендри рабочи клас буржуазийе хирĕç активлăн нисти̇нчен те сахал кĕрешни çинчен, хăй кунçулĕ пирки сахал тăрăшни çинчен, пысăк пусмăрта пурăнни çинчен манăн, сире хутĕлес шутпа калама тивĕç. Тата ăçтан пĕлес ĕнтĕ манăн: есĕр, тен, рабочи клас пурнăçĕн активлă йенне тепĕр произведени валльи хăварса, ун пурнăçĕн пассивлă йенне кăна кăтартса пама сирĕн çителĕклĕ сăлтавсем пулманнине?

## Фридрих Енгĕлс Миннă Каутскайа патне йанă çыруран

Лондăн, 1885 ç.,
нойабĕрĕн 26.

...«Киввисемпе Çĕннисем» романа—ăна йанăшăн чĕререн тав тăватăп—епĕ вуласа тухрăм. Тăвар кăларакан çĕрти рабочисен пурнăçне, «Стефанра» хресченсен пурнăçне кăтартса панă пекех, маçтăрла кăтартса панă. Венăри общчĕствăна[1]) кăтартакан картинсем те нумайăшĕ пит аван. Венă—пĕртен-пĕр общчĕствă пур нимĕç хули вĕт. Берлинра «уйрăм паллă ушкăнсем» анчах, тата нумайрах-паллăмаррисем, çавăнпа та унта литератăрсен, чиновниксен тата акторсен пурнăçĕнчен илсе анчах роман çырма мелсем пур. Сирĕн произведенийĕн общчĕствăна кăтартакан пайĕнче ĕçхĕлсене сăлтавласа пани вырăнăн ытлашширех хăвăрт аталанса пынине есĕр манран лайăххрах курма пултаратăр. Пирешкел çынсемшĕн ĕçхĕлсене çавăн йевĕрлĕ сăлтавласа пани вырăнăн ытлашширех хăвăрт аталанса пынă пек туйăнтараканнисенчен нумайăшĕ Венăра, Кăнтăрларипе Хĕвелтухăç Йевропăри çынсем нумайăшне пула хăйне йевĕр интернационалла характерлĕ Венăра, мĕнле пулнă çаплах пулмала пек тухса тăрать. Рабочисенне те, общчĕствă çыннисенне те характерĕсене есĕр йаланхи пекех уççăн индивидласа кăтартнă; романри кашни çын—тип, унпа пĕрлех вăл пĕтĕмпех хăйне йевĕр палăрса тăракан çын, «ак çакă»—тенĕ пулĕччĕ старик Гегĕл кашни тип пирки; вăл çаплах пулмала та. Анчах, йури ырланă тесе каласран, манăн мĕнле те пулин çитменлĕхе те кăтартса памала, кунта вара ман Арнольда аса илес килет. Чăнах та, вăл ытла та ўпкелемеле мар лайăх пек курăнса тăрать, кайран вăл çапах та ту çинчен ўксе вилет пулсан, çакна вара вăл çак тĕнчешĕн ытлашши лайăх çын пулнипе анчах поези йенчен тĕрĕс тесе шутлама пулать. Анчах автăрăн хăйĕн геройне нихăçан та ытлашши йуратса пăрахмала мар, ман шутпа вара есĕр кунта çак çитменлĕхрен хăтăлайман. Елзă, ăна та ытлашширех хитрелетсе кăтартнă пулин те, хăйне йевĕр палăрса тăракан çын пекех тухнă, анчах Арнольд сăнлăхĕнче çын пушшех те принцип ăшĕнче çухалса кайнă.

Çав çитменлĕхĕн тымарĕсем, сăмах май калас, романра хăйĕнчех сисĕнеççĕ. Сирĕн хăвăр шухăшсем çинчен халăх умĕнче каласа парас килнĕ курăнать, вĕсене есĕр пĕтĕм тĕнче умĕнче ĕнентермеле каласа парасшăн пулнă пулмала. Çакна есĕр тунăччĕ, вăл иртсе кайнă ĕнтĕ, çавăнпа кунашкал формăпа ун çинчен тепĕр хут калаçма та кирлĕ мар. Епĕ кирек йепле пулсан та тенденцилĕ поезийĕн тăшманĕ мар. Трагеди ашшĕ Есхилпа комеди ашшĕ Аристофан иккĕшĕ те уççăнах палăрса тăракан тенденцилĕ поетсем пулнă, çавăн пекех Дантĕпе Сервантес та; кунсăр пусне Шиллерăн «Хайарлăхпа йуратăвăн» тĕп пахалăхĕ те вăл нимĕçсен пирвайхи политикăла тенденцилĕ драми пулса тăнинче. Питех те аван романсем çыракан хальхи вăхăтри вырăс тата норвежцăсен писатĕлĕсем пурте пĕтĕмпех тенденциле çыраççĕ. Анчах та, ман шутпа, тенденци произведенире ĕçхĕл йавăнса пынă май ун çине йатарласа кăтартмасăрах хăйне хăй тухса тăмала; писатĕл хăй сăнласа кăтартакан общчествăри конфликтсем малашне мĕнле çулпа кайассине вулакана татса каласа пама тивĕç те мар. Çитменнине тата пирĕн условисенче роман ытларах буржуазишĕн, урăхла каласан, пирĕн тавраран мар тухнă вулакансемшĕн пулса тăрать, çавăнпа та вара, пурнăçри хутшăнусене чăн-чăн кăтартса парса, çав хутшăнусем мĕнле пулни пирки тухса кайса пуçпулса тăракан суйа шухăшсене аркатса, хальхи йĕркенĕн никĕсĕсем улшăнмала мар тесе каланисем пирки иккĕлентернипе буржуала тĕнченĕн оптимисăмне ишĕлтерсе пырса, социалисăмла тенденцилĕ роман хăйне тивĕç ĕçе тăвать те,—унпа пĕрле автăр çав конфликтсен малашнехи кунçулĕ мĕнле пуласси пирки татăклăн каласа паман пулсан та, татах, хăш чух автăр уççăнах леш йе ку йенне тăман пулсан та»...

### Вулакансене асăрхатарнисем.

1. Маргарет Гаркнĕс—Англири писатĕлницă. Ун калавĕ «Хула хĕрĕ» йатлă.
2. Çăлăнăç çарĕ—Вуçтăххăрмĕш ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче чухăнсене пулăшас шутпа тухса кайнă организаци. Йертсе пыраканĕ Вилйам Бутс пулнă. 1878 çулхи конгресра организацийе çар пек тума йышăнаççĕ. Вăл чăн-чăн пролетариле организаци мар.
3. Çен-Çимон—Францири чаплă социалист-утопист.
4. Роберт Оуĕн—Англири чаплă социалист-утопист.
5. Легитимист—тесе, Францире 1789 çулта тапранса кайнă Аслă Револьуцийчен йĕркешĕн кĕрешнĕ çынна калаççĕ.
6. grande dame (гранде даме)—пысăк дворенсен арăмĕсене çапла каланă.
7. Елеги—поезири жанр, хурланса çырни.
8. Миннă Каутскайа—Германири писатĕлницă. Хăйĕн произведенийĕсенче рабочисен пурнăçĕ çинчен те çырнă, анчах лайăх пурăнăç тăвас пулсан, пуçпулса тăракан классене сирпĕтмелине курмасăр, вăл тĕшмĕшле ăстăнпа, турра ĕненнипе кăна кĕрешет.
9. «Общчĕствă»—тесе, кунта Енгĕлс культура çывăх тăракан çынсене мĕнпе те пулин палăрса тăракан çынсене илсе калать.



Ромен Роллан

*(Ромен Роллан Орловă й-ш патне йанă фотс-ўкерчĕк).*

# Ромен Роллан Совет Сойузне килсе кайрĕ

Кăçал, ийуњ-ийуљ уйăхĕсенче пирĕн совет çĕршывне тĕнчери аслă писатĕл—Ромен Роллан килсе кайрĕ. Вăл, социалисăм çĕршывĕн аслă çулпуçĕпе—Сталин йулташпа тата нумайраппа çыру çўретсе тăракан тусĕпе—Макçим Горйкипе килсе курнăçрĕ.

Ромен Ролланпа Макçим Горйки тĕнчери литературăра чи малти вырăнта тăракан аслă йатсем. Ромен Роллан—пысăк художник, поет, философ, историк, музыкант. Вăл калама çук нумай çырнă («Жан Кристоф», «Кола Бренйона», «Клерамбо», халĕ çыракан «Очарованная душа» йатлă романсен пуххи, пйессăсем тата ытти те). Вĕсем пурте пиťех те пысăк, философилĕ шухăшсем тăратакан произведенисем, тĕнчен илемĕпе усал йепĕссене лайăх курса тăрса, етемлĕхĕн малашлăхĕсене палăртса хуракан пиťех те пысăк маçтăр произведенийĕсем пулса тăраççĕ. «Жан Кристоф»,—вăл ĕмĕр манми образсен кĕнеки. Писатĕл çак 10 томлă роман-епопейĕнче хăйĕн хăйулă шухăшĕсене çĕклеť, нацилĕ тата рассăлă чикĕсене çĕмĕрсе, мĕн пур етемлĕхĕн пĕрлĕхĕшĕн кĕрешес идейăна ťăратаť.

Ромен Роллан хăйĕн мĕн пур пурнăçне етемлĕхĕн ылтăнлă малашлĕхĕ çинчен, гуманисăм çĕнтерсе илесси çинчен шухăшласа, çавăншăн кĕрешес ĕçе пачĕ. Анчах капиталисла ťискерлĕх тĕнчинче гуманисăмшăн вырăн çук. Социалисăмла совет çĕршывĕнче кăна ун шухăшĕсем хăйсен шанчăклă вырăнне тупрĕç. Пĕр революцилĕ пролетариат çĕршывĕнче кăна пĕтĕм етемлĕх культуриш ахахĕсем тĕлĕнмеле пысăк хисепе чечекленсе хăпараççĕ.

«— Епĕ çамрăкла шухăшланисенчен есĕр нумайăшне пурнăçа кĕртсе пыратăр. Мана Совет Сойузĕн индустрилĕ строитĕлстви, унăн културă тĕлĕшпе тунă çитĕнĕвĕсем, уйрăмах нацилĕ республиксем ўссе пыни интереслентерет»—тет Ромен Роллан. Чăваш республикинчи колхозницăсем парне кўнĕ ĕлккен тĕрĕсемшĕн çак аслă гуманист пĕтĕм чунтан савăнса, хăйĕн тăванлă саламне йачĕ. Унăн чи çывăх тусĕ—Макçим Горйки чăваш пионерĕсен хаçачĕн редактăрĕ—Алтук Орловă патне йанă çырăвĕнче: «Сирĕн литератăрсене, тата кашни чăваша çав ирĕклĕ ĕçпе пултарулăхăн аслă телейлăхне тарăнăн, ĕмĕрлĕхех туйса илме сунатăп», терĕ.

Çак вăл ăпсăртран пулнă йапала мар. Вăл, експлоата-

тăрсен пусмăрĕнчен тухса, хăйĕн куԓтурлă ĕçĕсен 15 çулхи уйавне уйавланă кун тĕлне чăваш халăхĕ калама çук пысăк ĕçсем тунине, малашне татах та нумай тумалине пĕлтерет. Социалисăмла совет çĕршывĕнче пур нацисем те пĕтĕм етемлĕхĕн çутă, илемлĕ пурнăçне тунă çĕрте тăванлăн хутшăнса, етемлĕх куԓтурин чи чаплă çынĕсемпе алла-алăн тытăнса ĕçленине çак факт питех те лайăх кăтартса парат.

«— Манăн сирĕн ăрури етем пулассăм килет. Чăнах та, сирĕн патăрта çĕнĕ вăй пухма та май пур,—тет Ромен Роллан. Ватăлмалăх куна вăл çамрăклăх хавасላхĕпе çĕкленсе, йешĕл çеçкесем—ача-пăчасем çинчен уйрăмах ыйтса пĕлет.—Совет çĕршывĕнчи ача-пăчасем ваԓԓи çырма—мĕнле пысăк савăнăç. Вĕсем тĕнчери чи хавасла ачасем.—Сирĕн «Швамбранине» вуланă хыççăн спĕ хама-хам ача пек туйăнтăм,—терĕ вăл Л. Каççил писатĕле, Мускаври писатĕлсемпе иртернĕ калаçăвĕнче.

Пирĕн çĕршывра Кола Бренйонăн вилĕмсĕр, хĕвеллĕ савăнăçĕ чăн-чăнах пурнăçа кĕрсе пырат. Литературăпа искусствă тата мĕн пур куԓтурă тĕлĕнмеле пысăк вăйпа ӳсее пырат. Çавăнпа та Ромен Роллан:

«Мĕн пек телей çак тĕлĕнмеле çĕршывра ĕçлеме»,—тени пирĕн чĕресенче уйрăмах савăнăçлăн йанарат.

**М. Йеник.**

# „МĔН ПЕК ТЕЛЕЙ ÇАК ТĔЛĔНМЕЛЕ ÇĔРШЫВРА ĔÇЛЕМЕ“

*А. М. Горйкипе Ромен Роллан чăваш пионер хаçачĕн редактăрĕ Орловă Аԓтук йулташ патне йанă çырусем.*




Г о р к и к и. Августăн 10-мĕшĕ («Правда» корр.) Чăваш пионерĕсен «Пионер сасси» хаçачĕн редактăрĕ Орловă Аԓтук, Ромен Роллан Мускавра пулнă вăхăтра, А. М. Горйкипе ун патне чăваш хĕрарăмĕсем тĕрлесе илемлетнĕ парне, салфеткăсем йанă.

Çакăн хыççăн Орловă йулташ Алексей Максимăвичран ак çакăн пек çыру илнĕ (çырупе вăл Ромен Роллан тухса кайас умĕн çырнă):

«Сирĕн парнĕре илтĕм, сире тав тăватăп. Паллах ĕнтĕ, ĕç çав парнере мар, ĕç кунта—фактинче. Сирĕн халăх хăй çĕнĕрен çуралнине, хăйĕн куԓтурăлă ĕçĕ 15 çул тултарнине асăнса уйавланă кунсенче, есĕр, çав ĕçхалăхĕн хĕрĕ, халăхран тухнă вата вырăс литератăрне аса илтĕр. Çав халăх хушшинчен тухнă литератăр халăхĕн патшисем, творенĕсем, купцисем чăваша ĕмĕр-ĕмĕр пусмăрласа çаратса пурăннă.

Акă мĕнре ĕнтĕ пĕчĕк фактăн пысăк шухăшĕ. Çак факт—социалисăмла Совет республикисен Сойузĕнче ытарма çук лайăх ĕç, пур халăхсен, пур йăхсен, пур етемсен пĕртеп-пĕр тĕреклĕ вăйа чăмăртанас ĕç хăвăрттăн аталанса пынине тата тепĕр хут çирĕплетсе паракан факт.

Çак фактах тата, литератăр хăйĕн ĕçĕ çине пирĕн Сойузри пек ăшшăн пăхнине нихăш çĕршывра та, нихăçан та курман иккенне пĕлтерет.

Ĕнер пирĕн патăртан Ромен Роллан—питĕ лайăх писатĕл, тӳрĕ етем, пирĕн чăн-чăн тусăмăр кайрĕ. «Мĕн пек телей çак тĕлĕнмеле çĕршывра ĕçлеме»,—терĕ вăл. Епĕ сире, Орловă йулташ, сирĕн литератăрсене, тата кашни чăваша çав ирĕклĕ ĕçпе пултарулăхăн аслă телейлăхне тарăнăн, ĕмĕрлехех туйса илме сунатăп.

Аллуна хытă чăмăртатăп.

М. Г о р й к и.

Ромен Роллан йанă çырăвра çапла каланă:

*„Хаклă йулташ Аԓтук, епĕ есĕр йанă парнешĕн питĕ кăмăллă пултăм, сире тăванла салам йаратăп.*

*РОМЕН РОЛЛАН.*

# Йубилей кунӗ

*Н И Полорусӑв Шелепи*

Ордӗнлӑ республик,
Колхозлӑ халӑх,
Культурӑлӑ, чаплӑ
Паттӑр хуҫалӑх.

Ӗҫӗсем ударлӑ,
Машинсем хурҫӑ,
Уйӑвсем паратлӑ—
Йалкӑшаҭ пурҫӑн.

Унта ҫук чуралӑх,
Унта ҫук пусмӑр,
Пурте йулташлӑ,
Тӑванлӑ, туслӑ.

Акӑ вӑл ҫӗнтерӳ
Уйавне тӑваҭ,
Хаваслӑ, хӗрӳлӗ
Саламсем илет.

Мускав та, Хусан та
Саламлаҭ ӑна.
Куйбышӗв хули те
Ыралӑх сунаҭ.

Таҫти инҫери
Совет хулисем,
Йараҫҫӗ саламсем
Уйав йачӗпе.

Ҫӑмӑрӗ ҫӑваҭ,
Хӗвелӗ кулаҭ,
Чӑваш республики
Савӑнаҭ, выльаҭ.

Республик йурлаҭ,
Шупашкар ташлаҭ,
Горйки хули ӑна
Савса ачашлаҭ.

Чаплӑ кучченеҫ
Парнесем параҭ.
Хаклӑран та хаклӑ
Хӑнасем йараҭ.

Колхозник-ударник
Бригадирсем,
Комсомол, пионер
Маттур отретсем.

Совет Сойузӗн
Паллӑ геройӗ
Водопйанӑв та
Хӑнара унта.

Пролетарин паллӑ
Писатӗлӗсем,
Йаҫенски… Леонӑв—
Хаклӑ йулташсем
Чӑваш автономи
Чаплӑ уйавне
Йатарласа килнӗ
Йубилей кунне.
Пирӗн кӗрс-мерс
Олимпиадӑ
Вӗсене те мерттес,
Лайӑх курӑннӑ.

Горйки крайӗнчи
Паттӑр рабочисем.
Прамнек, Каганович—
Чаплӑ хӑнасем.
Сӑмах-йумах ҫивӗч—
Хӗрӳлӗ ҫулӑм.
Салам ҫине салам
Хӗрлӗ плошчӑдре,
Аслӑ Сталин йачӗ
Вӗҫет сывлӑшра.
Сӑмахсем ҫиҫӗмлӗ
Хӗмленсе вӗҫсе:
— Сывӑ пултӑр Орденлӑ
Республикӑ,—теҫҫӗ.
Сывӑ пулччӑр пирӗн
Ленин Орденлӗ
Паттӑр йулташсем—
Петров, Никитин.

Вутлӑ саламлӑ
Сасӑсем хыҫҫӑн,
Музыкӑ-оркестр
Шӑрапаҭ уҫҫӑн.

Республикӑ пирӗн
Ленин орденлӗ,
15 ҫул тулнӑ
Уйавне тӑваҭ.

Ҫавӑнпа чӑвашсен
Паттӑр колхозсем,
Хӑйсен пуҫ хулине
Пухӑннӑ пайан.

Колхозри оркестр,
Кӗсле-купӑссем,
Ҫӗнтерӳлӗ паттӑр—
Йурлаҫҫӗ вӗсем.

Вӗсен ҫав иккӗмӗш
Олимпиадӑ,
Ӑмӑртса ташлаҫҫӗ
Ҫамрӑкпа ватӑ.

Чӑваш республикӗ
Ленин орденлӗ—
Пролетари хаклӑ
Парнине илнӗ.

Октӑбӗрти аслӑ
Революципе,
Ӗҫӗ унӑн ҫапла
Хӑватлӑ пулнӑ.

Малали кунҫулӗ
Тата илемлӗ,
Чаплӑ, ҫутӑ сӑнлӑ
Коммунисӑмлӑ.

---

# Ҫӗр айӗнчи Мускав

*Ухсай Йаккӑвӗ*

Хӗвел ҫутти пӑри кӗлти пек
Чикет пите, сӑхаҭ тара.
Ҫырма йенчи ҫилсем те типӗ.
Асфальт ҫинче вӗри тӑраҭ.
Ӗҫе кайса килес чух епӗ
Иртетӗп Кирӑв урампе,
Почтамт панче тӑрса каҫ-ирӗн
Йатлаҫмӑп чӑркӑш ҫынсемпе,
Ҫӗр айӗнчен вӗҫтерӗп ирӗк,
Унта Метро вакунӗ пур,—
Ҫапла еппин, хӗвелӗм, ирӗл,
Еп тухиччен ҫӳре—сывпул.
Атте ҫӳретчӗ ҫӑвӑн-хӗлӗн,
Ҫӳретчӗ ҫӗр ҫинче анчах,
Ҫӗр айӗнче пулас пек тӗлӗк
Ӗмӗрӗнче курман пачах,
Кӑшман кӑна усраҭчӗ ӗлӗк
Йуман пуралӑ нӳхрепре.
Пӗтӗм саккунӗ ун, мӗн пурӗ
Кӗмен унтан шалти ҫӗре.
Ӑҫта кайас тен? Тамӑк мурӗ
Вӗренӗ ҫӗрӗн айӗнче,
Унта ан лек, ӗретлӗ пурӑн,
Ҫӗр тӑнӑ пысӑк кит ҫинче.
Ҫӳлте пӗлӗт кӑвак та тӑрӑ.
Ҫын кайӑк мар, ан ҫӳресем,
Ҫылӑхсене шутланӑ турӑ,
Кӑларнӑ имӗш процентсем.
Ҫӗрте те лӑпкӑ, шавсӑр пурӑн,
Унта ҫур турӑ пек патша,
Унта шуйттан, йӗрӗх харамӗ,
Пйие ҫӳреҫҫӗ пӑлхатса,—
Камран, камран кӑна хӑрамӑн,
Хӑран усал тийексенчен,
Халлап илтсе ҫех ларнӑ хамӑр
Йумах йуманӗ тӑррине.
Мана мӑйӑх шӑтма пуҫларӗ,
Сухал хырмашкӑн ҫул кӗрет,
Ҫурлалӑ уйӑх пек еп ҫамрӑк,
Кӑштах чуптунӑ еп хӗре,
Куккуксенчен ыйтса пӗлмесӗр
Пуҫлатӑп хамӑн ӗмӗре.
Курйерлӑ пуйӑссем ту витӗр
Тухса шӑваҫҫӗ Ҫӗпӗре.
Пурнатӑп сывлӑшра, шывра та,
Ҫӳреп ҫӗрте, ҫӗр айӗнче,
Тӗлӗк курмасӑр ҫывӑратӑп
Мосторг кровачӗ ҫийӗнче.
Мускав айне кӗме ҫук алӑк,
Йар усӑ ҫӑмӑл уттаран.
Йан-йан трамвай, шӑхлич сасси ак
Ӳксе йулаҫҫӗ хӑлхаран.
Сана кӗтсе илет сасартӑк
Нӳр сывлӑш тутлӑн, сулхӑнрах,
Унта тӑр кӑнтӑрла, ҫап-ҫутӑ,
Ҫурхи хула, ҫурхи илем!
Панулмисем пек мӑнтӑр тутӑ
Тӑраҫҫӗ ушкӑн лампӑсем,
Цехра туса шӑратнӑ лайӑх,
Електӑр хӗвелсем ҫиҫсе
Ҫунаҫҫӗ ҫӗр ҫинчийӗ майлӑн
Бетонлӑ горизонт ҫинче.
Вакун кайаҭ. Илсе ҫитерчӗ.
Тухап. Кӗтсе илет хӗвел.
Акаци хушшинче ҫил вӗрчӗ,
Темле ӑшшӑн кӗрет хӗве.
Хуртсен вӗлли пекех сӗрлерӗҫ
Йарапласем хутран та хут.
Сенкер тӗтӗм сапса ишет ҫеҫ
Тӗтре пек шурӑ пӑрахут.
Урам кӗрлет. Васкав иртетӗп.
Шухӑшсемпе пуҫа лӑскап:
Шывра та, сывлӑшра, ҫӗрте те
Ӳсеҫҫӗ темиҫе Мускав.

# ТУПСĂМ

Арк. Ĕçхĕл ● *Калав*

Кам шутланă МТС-ăн чаплă бригадирĕсенчен пĕри, Кервен Микулайĕ, капла пăсăлса кайасса?! Райкомол çекретарĕ Йуманăв, малтанах, Микулай ĕçме пуçланă теннне илтсен, комсомолĕçсем çинчен йури елек сараççĕ, тесе вăрçнă. Пайан акă Микулай райкомола ӳсĕр пырса кĕрсен те, Йуманăв хăй куçне хăй ĕненмесĕр ларнă. Анчах Микулай, ун умне талкăшса пырса, пылчăклă чышкипе сĕтел çине кĕрслеттерсен, усал сăмах чăн пулнине пĕтĕм чĕрийĕпех ăнланса илчĕ вăл. Йуманăв ура çине çĕкленчĕ, Микулай ун куçĕнчен хăйĕн йунăхнă куçĕсемпе чылайччен шăтарас пек пăхса тăчĕ те, сасартăк ачалла уласа йачĕ:

— Пĕтрĕм епĕ... Епĕ шофĕр пулма ĕмĕтленнĕччĕ... Унтан... Унтан малала вĕренсе—самољотпа вĕçме. Пĕтерчĕç, таптаса лӳчĕркерĕç ĕмĕте... Камсем?.. Пурнăçа хĕршĕн пурнакансем... Епĕ трактăр çинче пилĕк çул ĕçлерĕм, вĕсем апла туман пулсан тата 'та ĕçлеме хатĕрччĕ... Ку таранччен нимĕнле хура ĕçе те тиркемен... Хĕршĕн хур турĕç. Хĕршĕн...

Йуманăв нимĕн тума та аптăрарĕ. Мĕн тăвăн пăлханнă ӳсĕр чунпа? Ăнланма та çук, лăплантарма та çук. Микулай шавланине илтсе райкомола çынсем пухăна пуçларĕç. Йуманăв ĕç шала кĕрсе ӳкессинчен шикленсе ӳкрĕ.

— Чарăн,—пӳлчĕ вăл Микулайа,—хупахра мар вĕт есĕ.

Ку сăмахсем Микулайшăн шĕл-кăвар çине краçын çапнă пекех пулчĕç. Вăл пылчăклă чышкине 'тепĕр хут çĕклерĕ. Анчах çак вăхăтра ун аллине парти райкомĕн çекретарĕ Федотăв пырса тытрĕ. Микулай варт кайала çаврăнчĕ. Куçĕсем ун Федотăв куçĕсемпе тĕл пулчĕç, вăл çавăнтах пуçне усрĕ. Шăм-шакĕ тутăр пек çемçелсе карĕ, çӳле çĕкленнĕ алли Федотăв алли çине ӳкрĕ.

— Вăт геройлăх!—терĕ Федотăв ăшшăн кулса,—геройран та иртсе кайнă пулас есĕ?! Хĕршĕн çапăçатăн апла. Анчах, итле-ха, Микулай, халђи хĕрсем кун пек геройсене йуратмаççĕçке. Пит-куçна та çуман есĕ, çипуçу та хăйĕн тирпейлĕхне тахçанах çухатнă. Халђ епĕ шыва кĕрсе килтĕм, ех, лайăхçке! Акă йертсе кай-ха, Микулай, çак йĕкĕтсене. Кайса уçăлăр. Вара, ман пата, çӳле улăхăр. Пайан пыраймасан ыран та пултаратăр. Сӳтсе-йавăпăр, тупăпăр кам айăплине.

Кунта ачасем пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхса илчĕç. Шăпах пулчĕç вĕсем. Анчах шăплăх нумайа пымарĕ.

— Карăмăр!—кăшкăрчĕ Йуманăв, çĕнĕ сасăпа самантлăха лăпланнă пӳлĕме хускатса.—Карăмăр,—тапранчĕç ачасем. Микулайа иккĕн-виççĕн хул айĕнчен тытрĕç те, кĕпĕрленсе тухса ывтăнчĕç райкомолтан. Федотăв вĕсем çине пăхса, савăнăçлăн кулса йулчĕ.

— Ех, мыскараçăсем!—терĕ Федотăв, районти комсомолĕçсем чĕререн йуратакан ватă бољшевик, партизан, хисеплĕ етем.

* * *

Микулай сат-пахчинчи хурал будкинче выртнă. (Кунта ун çывăрмали вырăнĕ). Кĕçĕр вăл куç хупман. Канăç паман ăна трактăр сасси. Хăватлă сасă инçетри хиртен çĕкленсе, тĕнче талккишĕ тăрăх саланса йейӳленнĕ, пăлханнă. Трактăр сасси асаплантарнă, анчах Микулай выççăн, таранăн итленĕ ăна.

Вăл пĕр сывламасăр çăтнă, унăн чыхăнса ларас килнĕ трактăр сассипе. Вĕреннĕ сасă, йуратнă сасă! Йепле аван ĕçлет инçетри трактăрăн моторĕ! Пĕр улшăнмасăр, пĕр чыхăнмасăр! Йепле вăл аслă çĕре хăйне парăнтарať, йепле вăл хăватлă!

— Кам ларať-ши вăл трактăр çинче халђ? Петĕр-ши, Нинă-ши, Ваççук-ши, кам-ши?—Микулай ура çине тăчĕ, пахчана тухрĕ. Чĕри ун трактăр моторĕ пек ĕçлет, анчах пăсăк мотор пек.

— Кам-ши инçетри трактăр çинче? Авă, хĕвелтухăçĕнче шурăмпуçĕн пурçăн каррийĕ выљанса çĕкленет. Йепле аван куранмала хурçă улăп çав пурçăн екран çинче. Нимĕнле художник те, нимĕнле писатĕл те ку таранччен ун пек сăнлăх параймаи-ха. Епĕр, аслă çĕршывăн ачисем, вăл картинăна хамăр алăпа тăватпăр. Кам-ши халђ çав



Çĕмĕрле комбиначĕ. Хăма çуракан цех, сулахайра механически цех

*Макарăв худ. ӳкерчĕкĕ.*

инçетри трактăр çинче? Пилĕк çул хушшинче епĕ те шурăмпуçĕпе сахал мар иленнĕ. Йепле аван тĕнче! Йепле аван трактăра хирĕç анлă хире хĕвел чупса тухсан! Анчах мĕншĕн-ха ман ăшăмри мотор тĕрĕс ĕçлемест? Çав Зойă йатлă хĕр йуратма пăрахнишĕнех-ши? Хĕршĕн çапла çунмала-ши ман—комсомолĕсăн, ударник-бригадирăн? Çапах та мĕншĕн йуратмаст̆ мана Зойă? Пĕрле ӳсрĕмĕр, пĕрле вĕрентĕмĕр, пĕрле трактăрис, пĕрлех бригадир пултăмăр. Нихçан та йурату çинчен калаçман, епĕ ăна шăппăн йуратнă. Зойă халђ хамăр колхоз председателĕпе туслашрĕ. Лешĕ илĕртет...

Çапла пăлханнă Микулай. Сывлама сывлăшĕ çитмен, вăл чыхăннă. Вăл йурату мĕнле вăйлине малтанхи хут туйса илнĕ. Йурату—пысăк вăй! Микулай шухăшланă: мĕн калĕ-ши ĕнтĕ ыран, райком çекретарĕ Федотăв? Йуманăв, нумай пулмаст̆, хăйĕн пленумра тунă докладĕнче, ударниксем çинчен калама тытăнсан, Микулай йатне уйрăмах палăртса хăварчĕ. Кристалл, ахах пĕрчи, терĕ вăл. Ун чух Йуманăв, сылтăм аллинчи виçĕ пӳрнине чăнах та ахах пĕрчи тытнă пек пĕрле чăмăртаса тытрĕ те, хăй пуçĕнчен çӳлеле çĕклесе, ахах пĕрчине сывлăшра вылђатрĕ.

— Акă кам пек ĕçлемеле! Акă камран вĕренмеле! Пирĕн Микулай социалисăмла техникăна хăйĕн çивчĕ ăстăнĕпе чăн-чăнах комсомолла çавăрса илнĕ,—терĕ.

Залăра ларакан ачасем ун чух тăвăллăн алă çупрĕç. Анчах пайан, пайан мана Йуманăв урăхла хак пачĕ».

* * *

Райкома Микулай ирех çитрĕ. Никам та çук. Чылайччен кĕтсе ларчĕ вăл. Райком çекретарне мĕн каласа памалине пĕтĕмпех шухăшласа хучĕ. Тӳрех калат̆: «Çынсем ӳсеççĕ. Епĕ мĕншĕн кайра пулмала?» Çак вăхăтра Федотăв килсе кĕчĕ.

— Есĕ кĕçĕр çывăрман та пулђ? Мухмăрла мари-ха? Ну, ăта, ман пӳлĕме,—шавлă сасăпа хавхалантара пуçларĕ вăл Микулайа.—Е-е, ман кабинет пăчăхса ларнă мĕн-и? Кантăксене уçар! Вăт çапла. Çил вĕртĕр. Йуратмастăп пăчлăха. Ха, кунта чечексене шăварман тата,—мĕнле-ха манаççĕ? Чим, епĕ шыв илсе килем. Ӳсен-тăран нӳрлĕхе йуратат̆. Сĕткен кирлĕ, сĕткен.

Микулай ку сăмахсене илтсен шăлт тĕлĕнчĕ. «Пурне те асăрхат̆,—шухăшларĕ Микулай,—пурне те туса ĕлкĕрет. Епĕр тепре чух трактăра чипер тыткалама пĕлместпĕр. Район трактăр пек мар пысăк машинă. Федотăв çак машинăна миçемĕш çул ĕнтĕ пĕр тĕрĕс тытса пырат̆. Пĕр гайкине те пушанма памаст̆. Акă епĕ, калăпăр, гайкă, йулашки вăхăтра пушантăм—сисрĕ,—хытармала! Хытарат̆».

Федотăв графинпа шыв илсе килчĕ. Чечексене йĕркеренех сапса тухрĕ.—Акă, розă, йепле сарăлат̆, ирхи хĕвел пек. Астрă тата розăран йуласшăн мар,—савăнат̆ Федотăв. Чăнахах та, райком çекретарĕн кабинечĕ клумбă пек. Ку кабинетра пысăк задачăсем шутланаççĕ, пурнăç ыйтăвĕсем. Кунта—пурнăç!

— Ну, Микулай тусăм, мĕн есĕ ура çинче тăратăн, лар,—Федотăв хăйĕн йаланхи вырăнне ларчĕ.—Пуçа хыртартăм ĕнер, шăрăхпа кăвакара пуçларĕ, тӳсеймест. Ну, тусăм, каласа пар, мĕн ыратат̆, мĕн ĕмĕтленен, кама йуратан, кама курайман? Епĕр те çамрăк пулнă, епĕр те аташкаланă. Çамрăклăх—шухă вăхăт. Халĕ ватăлса пынишĕн пăшăрханатăп. Ан ватанса тăр. Тӳрех кала.

Федотăвăн шакла хырнă пуçĕ çине пăчăр-пăчăр тар тухрĕ. Вăл кĕсйинчен шурă сăмса тутри кăларчĕ те пуçне йерипен шăлкала пуçларĕ. Микулайăн малтан хатĕрлесе хунă сăмахĕсем пĕтĕмпех çухалса пĕтрĕç, пĕрне те тупма çук. Вăл хăйне сасартăк ватăлса ларнă пек туйса илчĕ. Ун умĕнче—çамрăк çын, вăл хаваслăн калаçат̆, кулат̆.

— Мĕн каласси,—йăвăрăн сăмах хушрĕ Микулай,—епĕ ку таранччен ĕçмен. Питĕ тарăхрăм çав, Иван Федотăч... Есĕр еп мĕнле ĕçленине пĕлетĕр—йаланах хĕрлĕ хăма çинче, йаланах премн. Пирĕн колхоз кăçал авто-



Çĕмĕрле комбиначĕ. Комбинат цехĕсенчен пĕри, хыçалта „Болђшевик" савăт

*Макарăв худ ӳкерчĕкĕ.*



В. МАКАРĂВ
худ. картинĕ.

Физкуљтурницă

машинă илчĕ. Шофер кирлĕ. Ман шофĕра вĕренме кайас килетчĕ, Иван Федотăч. Вĕренме йаччăр тесе, кăçалхи çуракине тата лайăхрах ĕçлеме тăрăшрăм. Анчах ĕç урăхла çаврăнса тухрĕ. Çураки пĕтертĕмĕр, трактăрсене тĕплĕн пăхса тухма маçтерскойне илсе таврăнтăмăр. Зойăна та пĕлетĕр пуђ есĕр... Мыскар Зойи. Епĕр унпа пĕр колхозранах, вăл та хăйĕн бригадипе таврăнчĕ. Трактăрсене часах салатса хутăмăр. Ĕçлетпĕр. Пычĕ кĕчĕ çакăнта пирĕн колхоз председателĕ.—Ну, атсемĕр,—терĕ вăл пире. Куçĕсем хăйĕн Зойă çинчех.—Епĕр, терĕ председател—колхозниксемпе пăхса тухса, Зойăна шофĕрсен шкулне вĕренме йамала турăмăр. Чылайлăха. Штобă лайăхрах ăнланса килтĕр. Кун пирки ĕнтĕ МТС директăрĕпе те калаçса татăлнă,—терĕ. Ман, Иван Федотăч, ĕмĕт çаврăнтах хуçăлса анчĕ. Хаљхи çамрăксем кашни малала вĕренесшĕн. Епĕ трактăр çинче пилĕк çул ĕçленĕ вĕт. Манăн çӳлерех кайас килет, хамăн пултарулăха пĕлес килет. Шофĕр пуласси çинчен çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрмасăр ĕмĕтленнĕ епĕ, Иван Федотăч. Пирĕн колхоз председателĕ тĕрĕс ĕçлемест. Зойăпа вĕренме йанăшăн мар калатăп епĕ, председател ку ĕçе Зойă çумне йавăçас шутпа тунă, хĕр умĕнче ырă пулас шутпа. Хĕршĕн... Есĕ тӳрех калама хушрăн, тӳрех каласан—ман ĕмĕт хуçăлчĕ. Тарăхрăм, вара ырă мар ĕç турăм...

Ку тĕлте Микулайăн сасси сасартăк пӳлĕнчĕ. Хĕрсе кайнипе ытлашши калаăм пуђ тесе, хăраса ӳкрĕ вăл. Çак вăхăтрах райкомол çекретарĕ Йуманăв та килсе кĕчĕ.

— Йуманăв,—чĕнчĕ Иван Федотăч Йуманăва, леш кĕнĕ-кĕменех,—пулăшмала йĕкĕте. Тупсăмне тупмала. Итле-ха, Микулай, вĕренес тетĕн, мĕнле шкула кайасшăн-ха есĕ?

— Шкула?.. Индустриаљнăй пулсан... анчах теплеçке,—хăйусăррăн, темле çухалнăн сăмах хушрĕ Микулай.

— Ну-кă, Йуманăв, сирĕн унта командировкăсем пурччĕ, илсе кил-ха.

Йуманăв васкавлăн тухса карĕ. Микулай темшĕн шикленсе пуçларĕ. «Пултаратăп-ши?!» шухăшларĕ вăл. Йуманăв часах таврăнчĕ. Федотăв командировкă хучĕсене хăй аллине илчĕ.

— Индустриаљнăй, индустриаљнăй,—терĕ вăл йерипен тăстарса.—Аха, Горйкинчи индустриаљнăй рабфак. Пыра та пырат пуђ. Чим, малала пăхар... Хусанти авиаци институчĕ çумĕнчи рабфак... Вот! Авиаци рабфакĕ!—хыттăнах кăшкăрса йачĕ Федотăв.

Микулай кунта пачах çухалса карĕ. Умра сасартăк темле çĕнĕ алăк, çĕнĕ тĕнче уçăлнă пек туйăнчĕ ăна. Вăл ура çине тăчĕ. «Намăс... Намăс... ай, намăс, ĕнер епĕ ӳсĕр пуçпа пырса кĕнĕ вĕт райкомола...» Микулайăн çан-çурăмĕ тăрăх сивĕ тар чупа пуçларĕ. Вăл çаврăнтах пăрăнчĕ те алăк патнелле утма тытăнчĕ.

— Ара, есĕ ăçта таратăн? Ĕç таталман вĕт!—кулакула чĕнсе илчĕ Федотăв.

Микулай кайала çаврăнчĕ, пĕр чечек тĕми патне пырса тăчĕ те пуçне чикрĕ.

— Питĕ намăс, Иван Федотăч, ĕнерхишĕн,—терĕ вăл шăппăн,—урăх нихăçан та ун пек хăтланмăп.—Шанатпăр, тусăм, шанатпăр, кун пек пĕтĕм чĕререн калană сăмах çине шанма пулат,—çĕнĕрен хавхалантара пуçларĕ Федотăв.—Есĕ хăвăн шанăçна çухатман. Вĕренсĕн, пулăн авиаци инженерĕ. Зойă çухалмĕ. Зойă çĕр çинче автомашинăпа чуптарса çӳрĕ, а есĕ—сывлăшра, стратосферăра. Хăв тунă аеропланпа, стратопланпа! Зойă ун чухне хăйех пырса калĕ:—Илсе кай, тейĕ, мана та стратопланпа Америкăна! Совет Америкипе—колхозсем тума!

Микулай хăй умĕнчи чечек чӳлмеккине икĕ аллипех йарса тытрĕ. Райком çурчĕ сывлăша çĕкленнĕн туйăнчĕ ăна. Акă ун аллинчи чечек тĕми те сывлăшра.

— Иван Федотăч, сана та лартса кайăп Америкăна,—кăшкăрчĕ Микулай чечек тĕмине ухласа. Кунта Иван Федотăч хăй вырăнĕнчен тăчĕ. Микулай патне пырса, ун аллинчен чечек чӳлмеккине илчĕ те сĕтел çине лартрĕ.

— Кайасси кайăпăр, анчах есĕ ман чечексене ан çĕмĕрсе пăрах,—терĕ Федотăч. Виççĕшĕ те пĕр хаваслăн, пĕчĕк ачан уçăмлă куллипе кулса йачĕç.

# Т И Г Ă Р

**Усман • *Калав***

*Рожков Михалине -слесăре*

Хăйĕн хулăн сассипе таврари сывлăша хускатса йапăрат гудок. Ку йанăрав икĕ хутлă хыр пӳртсем хушшине кĕре-кĕре шăпланат. Пушар каланчи те, гудока хирĕç таврăнса кăшкăрнăнах, хăйĕн çурăк чапне ултă хутчен йанăратса илчĕ.

Айакранах илтĕнет чарăнусăр савăт пĕтĕм хăвачĕпе мĕшлени. Ыйăхран вăраннă поççолăк йăлтăркка куçĕсене уçат. Шартлама сивĕ сывлăша автомобил çухăрнисем çурса тăраççĕ. «Кукушкă»—пĕчĕк паравоз—ăйăрла кĕçенсе, сĕм вăрман тăрăх йан-йан! кайан сасăпа харкашма пикенет. Ку вăхăтра кашнийех ĕçе васкат. Кашнийех хăйне кура, спецовкине уртса йарат те, ирхи чĕмсĕрлĕхре уттине вĕтетет, автобус çине ларса ыткăнат.

Часах, хапрăк-савăтсем хушшинчи буљвар йевĕр урам хулăм шавпа тулса ларат. Вĕçĕмсĕр йухăм. Автобусран пĕр кăвак шинеллĕскер тухрĕ. Вăл, хаљ çеç çартан таврăннăскер, ĕçе кĕреймен-ха. Çавăнпа та васкамарĕ пулас.

— Сывă-и, Зоçă!

— Оо-о, Зоçим Филим ывăлĕ!

— Таврăнтăн иккен?..

Кашни иртсе пыраканах Зоçăна пуç тайса ал тытат, кăмăл тăват.

Зоçă аллине шљом сăмси айне тыта-тыта илет, хăй çухавийĕ çумĕнчи петлици пекех кĕренленет.

— Сывах-ха!

— Есĕр мĕнле?

— Аван!

Вăл пĕр самантлăха чарăнса тăчĕ. Темскере шырама пикенчĕç унăн шљомĕ çинчи хĕрлĕ çăлтăрĕ пекех йăлкăшакан куçĕсем. Темĕн тупасшăн вăл икĕ çул курман тăван кĕтесре, темĕн ыйтса пĕлесшĕн икĕ çул хушши курса каласман паллă рабочисенчен? Мĕн тунсăхлатнăши ир йеппепе çеç пуйăс çинчен аннă Зоçăна? Тимĕрбетонлă корпуссен хашкавĕ чăтлăхра йан-йан! кайнипех-и тен, унăн шăм-шакне çӳçентернĕ?.. Аскăн çилре шăхăрса улакан чăтлăх! Шăмалса иднĕ кĕрхи çăмăр... Кам пĕлет, тен çаксем асран тухаймасăр çĕмĕреççĕ унăн пуçне? Кам пĕлет, тен çавăн чухне тĕл пулнă дезертирсем аса килчĕç ăна. Ăшранах хускатнă, хастарлатнă ăна аскăн чăтлăх. Ку пурте, ача чухне «тусне» çухатнă хыççăн... Кăмпаран пĕччен ĕçхăрса таврăнма тивнĕ ăна. Тарса çӳрекен поручик çырмаран тухнă, ачине, Зоçă тусне вăл хăйĕнпе хăварнă, ăна намăслантарса: «...никама та ан каланă пултăр!.. Чĕлхӳне шăл хыçĕнче тыт!..» тесе хулăпа пĕçертсе йанă. Шуррисем çывхарса килсен деçертирсем çухалаççĕ. Çак кунран Зоçă «тусĕ» те—путланат...

Чăтлăх! Тен, лăпкă чăтлăх йăпатнă? Таврăранах ирĕлекен кайăк йурри! Шăрçаланнă çырласем... Çак кунран вĕт, нивелировщикпе ĕç çыхăнат. Çак кунран ĕшнеленет чăтлăх, кăвак пĕлĕт уçăлат. Пăчăкă, пуртă кунран кун уçланкăна аслатат. Кашкăрăн, тилĕн, мулкачăн—ирĕкĕ путланат. Çакăн хыççăн, нумай пинлĕ ĕçлекенсен ăмăртуллă аллисем савăтăн корпусĕсене цементлеççĕ. Еçре—çамрăк каччăн шăм-шакĕ тĕрекленет. Часах, екстракт савăчĕ чĕрĕлет те... Пĕрремĕш пилĕкçуллăх планри предприйатисенчен пĕри—ĕрете тăрат. Раççей ĕлĕк, Хĕвеланăçри патшалăхсен екстрактчĕпе пăнтăхнă пулсан, Совет Сойузĕн тир промышлĕннăçне ваљљи кирлĕ тонпит хаљ хăйĕн.

Строителства пуçланнăранпах ĕçленĕ, производствăра маçтăр пулнăскерне, Зоçăна, савăт—тăван кил; ăçтан хумхатмĕ вăл ăна хăйĕн ытамĕнче? Ăçтан кăтăкламĕ ăна хăнăхнă шăршă? Йепле хупламĕ мамăк пек пăс?



Й. А. ЗАЙЦЕВ
худ. картинĕ.

Чăваш хĕрарăмĕ

Йепле çӳçентермĕ вăл ăна суккăрлантаракан йăлтăркка çуттипе? Çавăнпа çеç-и тен, Зоçă шухăшлă?

Гудок. Хастар гудок ăшранах пăтратат. Зоçă та савăт управленипе кĕрет. Штык йевĕр шĕвĕрĕлсе аннă пăрсемпе капăрланнă, анлă, ирĕк корпуссем ывăнмасăр чĕтренсе лараççĕ.

---

Савăт комитетĕнче Зоçă комсомол çмени ĕçе кĕни çинчен пĕлет. Çара кайиччен вăл ку бригадăна хăй йертсе пынă. Мĕ кайса курас мар? Пропуск илсе цеха васкарĕ.

Туракан цех. Зоçă кĕнĕ-кĕменех елеватăр куркинчен турпас ывăçласа илсе пăхат. Ремонтри станок умĕнче тăракан çлесăрсене тĕлĕнтерсех, барабана, подшипниксене, çĕçĕсене, контрçĕçĕсене асăрхавлă тыта-тыта пăхат, виçет. Шашăнпа станоксем хушшинчи комсомолĕссем йуман вуттипе кĕрешсе хавасланатараççĕ. Тăвата станок хăлхана питĕрсе вутта турпаслаççĕ. Вĕçĕмсĕр чĕнсем пĕр вырăнта тăнă пек йухаççĕ. Шахтăра транспортор, хăй ăссĕн калаçнă пек, кăлтăртатат.

— Çĕçĕсене кам сире 5 миллиметăра ларттарат?

— Механик помощникĕ...—ӳркевлĕн ответлерĕ çлесăр.—Вăл лăпăртатат-ха, Зоçă, вăл...

— Аха-а?!

Зоçă чылайччен цех тăрăх турткалашса утрĕ. Тем пăшăрхантарчĕ. Тивĕçсĕр ĕç? Шав? Кам пĕлет, тен çак шавах, çекретри пек сыхлантарчĕ ăна?..

Çак самантрах унăн куçĕ умне çекретри ӳкерчĕксем шăвăнса тухаççĕ. Пайанхи пекех астăват вăл чикĕ хĕрринчи каçсене. Ак вăл çекретра...

Хĕвел анать. Таврa тĕттĕмленет. Йĕке пек тӳрĕ, сарă хырсем. Чăтлăх йулашки хут пăрчăланать. Йăвăçсем хушшипе тĕкĕр пек йăлкăшса куранакан шыв та хăмăрланать. Ку шыв границă. Леш йенчи, йут патшалăх çĕрĕнчи сăртсем сĕт пек тĕтре ăшне кĕрсе пĕр-пĕринпе таплашаççĕ.

Каç пулса килнĕ май Хĕвелтухăçĕнчен хулăм пĕлĕтсем пĕр-пĕринпе ăмăртса васкарĕç. Айакра çиçĕм çиçет, çăмăр пĕлĕчĕсем хуралса хăпараççĕ. Часах шăмалса илет. Чарăнусăр куштан çил ахăрма тытăнать. Вăрманта ӳсе ханăхнă пулин те, границă хĕрринче кун пек каç—шиклĕрен те шиклĕ. Кайăк кăшкăрса йарать-и, çутă хурт йăлкăшать-и, йе, çĕлен, калта чăштăртатса илет—куçа, хăлхана çивĕчлеттерет, хăрушă хыпар шыраттарать. Хăш чух, тăшмана курмасăр, илтмесĕр—ăшран сисетĕн...

Ак... Чăнах та... патак хуçăлать... Мĕлке çывхарать... Хушăран чăштăртатса илет... Йăвăррăн хашкани те илтĕнет... Путланать...

Затвор патрона патронннике кĕртет. Кăкăр умĕнчи пĕчĕк хунар кнопки çине кача пӳрне тĕкĕнет.

Мĕлке татах сикет...

— Стой!

Кăкăр çумĕнчи хунар хăйĕн çутипе çиплесе салатать, мĕлкене çутатать.

Качака сухаллă çын йăвăç çумне пытаннă. Тумтирĕ—çĕтĕк-çатăк халат. Урисенче—чувйак. Вăл шур куçĕпе хăйаккăн пăхать. Чалăш тута. Йĕрĕк. Тута кĕтессинче ылттăн шăл. Сылтăм алли çĕтĕк ăшне хăвăртах пытанчĕ пулин те, çутă сисĕмсĕр пулмарĕ, револьвĕр барабанĕ çутăлса кайса, хăйĕнчен сыхланма кирлине асăрхаттарчĕ.

— Руки вверх!

Хайхи çын ӳркенсе аллисене йатрĕ.

Пĕчĕк хунар сӳнет.

Тата... Тем чăштăртатать... Йăвăç тĕми хушшинчен пĕр мăшăр ылттăн йăлтрийĕ пек çутă куранать. Аллисем пăшала хытăрах пăчăртаççĕ.

Тигăр.

Çутăсем сӳнеççĕ. Пиçӳлĕ хӳре патмар кĕлеткене чăштлаттарса илет... Татах... Çук...

Икĕ тигăр?!. Пĕри—револьвĕрлĕ тăшман, тепри—чăнчăн тигăр. Пĕрне типĕтес... Тăхтас... Тен, айăпсăр, тигăр хăвалаcа килнипе лекрĕ пуль... Тигăр. Ăна пĕре персех тивертес пулать вĕт-ха. Лайăхах тивертеймесен тепре пеме памĕ. Утланса ларсан пуç урăх йăтăнаймĕ.

. . . . . . . . . .

Зоçă çаксене аса илет те, хăй цехра ниĕнне асăрхать.

Унăн шăм-шакĕ çекретри пекех чĕтрет. Вăл пĕре шăлне çыртса илет, тепре—вутă тусанĕпе саралнă комсомолĕс тусĕсемпе кăмăлланать.

Йĕркерен вырнаçнă чансем. Пăхăр трубасен çиçтеми. Хул-çурăма авакан рычаг. Манометр. Йăлтăркка термометр. Винтĕл. Çаксем пурте Зоçăшăн—тĕпел кукри.

— Пушă ĕçлетĕр,—терĕ Зоçă, картус сăмси айĕнчен палламĕш пек пулса пăхакан диффузорщике.—Пăс çителĕксĕр тытатăр.

— Йулашки хут ремонт тунăранпа ĕç ăнмаст,—хирĕç тавăрса хучĕ диффузорщик.—Темĕнле тăрăшсан та ĕнерме çук, Зоçă... Батарейсене йĕркелесе çитерме май тупаймастпăр...

— Тĕвĕ!..

Тултармали тата пушатмали уйрăмсене кĕрсе çавăрăнса тухсан, Зоçăн аллисем пушшех чăмăртанчĕç. Нӳрĕ турпас транспортӧрĕ сахал турпаспах таталнă.

— Сăнчăра кам кунашкал пуçтарттарнă?

— Çамрăк механик!—кăшкăрса йачĕ ăна хирĕç халь çеç пăс айĕнчен çарапакартан сиксе тухнă Зоçă тусĕ.—Сывă-и? Часрах ĕçлеме кĕр. Пăх-ха, Зоçă, транспортӧр йепле хирĕнсе шăвать. Ма таталас мар?



Çĕмĕрле комбиначĕ. Йуман каскасем.

*Макарăв худ. ӳкерчĕкĕ.*

— Мехх-ха-аник?!.—терӗ вăл, тусӗн аллине хыпкăчла йарса илсе.—Есӗр ăçта пулнă? Техникă екзамӗнне тытнă пулӗçке?

— «Аван» хак илтӗм...

Зоçă чӗмсӗрленчӗ. Каллех вăркаҭ унăн ăшчикӗ.

...Каллех тигăр аса килет. Вăл асăрхаман хушăра хыçалтан сиксе ларасшăн. Сыхă пулмала, çав вăхăтрах куç тӗлне пулнă «çӗтӗке» асăрхамала. Çитменни çине, вăл, çывăхран çывăха шăвăнаҭ.

— Назад! Кру-гом! Ложись!

«Тирпейлес»... Пăшал çӗклепет... анчах... каллех ылттăн йăлтри пек çиçен куçсем тухаççӗ. Пăшал хăвăрттăн çутă йеннеле çавăрăнаҭ. Куç тӗллев шыраҭ. Курок... Мӗлке хусканчӗ... Аллипе хăмсарса илчӗ. Пăшал хăвăртрах çавăрăнаҭ. Револьвӗр унăн аллинчех вӗт-ха!..

— Вырт! Хуртлă!..—чăвашла сăмах тухса кайрӗ.— Ложись! Не шевелись!

— Тăван чăваш!—хайхискер чăвашла тархасларӗ.— Ан вӗлер!.. Еп... са-арăмсăр лекнӗ... Еп... Чăваш... Çӗршывӗнчен... Кача-мучăсем...

Пăшал усăнаҭ. Курок çинчи пӳрне чăсăлаҭ. Чăваш?! Çавăн пек инçетре. Çав хушăрах дезертир ашшӗпе çухалнă «тус» аса килет.

Хунар сӳнчӗ.

Тигăр путланчӗ...

Чикӗри ӳкерчӗксем сирӗле-сирӗле кайаççӗ. Зоçă куç умӗнче каллех цех.

Цех тăрăх кускаласа çӳрекен Зоçăн пирусӗ çăварӗнчен татăлмарӗ. Ăшчикӗ вăркана çемӗн вăркама пуçларӗ.

---

Вакум насос махозикӗ пек шухăш çавăрăнаҭ. Зоçă хăйне ларса тăма та вырăн тупаймасҭ. Выпăркă корпуссенчи йуман сӗткенӗ пекех ăшӗ вӗрет. Пурте унран кулнăн туйăнаҭ. Приборсем хăйаккăн пăхаççӗ. Кестнӗр аппаратăн контроль карăнтăкӗсем витленӗ пек кăпăкланаççӗ. Помпăсем найанăн лăкăртатса чӗрене йӗплеççӗ. Пиçсе çитмен, çителӗксӗр бомеллă екстракт пăтранчăк шыв пек йухса куçа касаҭ.

— Ку насуссене кам лартнă?

— Арра, çав, çӗнӗ механик,—терӗ аппаратчицă, машин отделени йеннеле хăмсарса.—Хăвачӗ çитмест пулас. Пӗçерме йăвăр.

— Механик?!. Тигăр?!.—куçне машин отделени çинчен куçармасăр хытса кайрӗ Зоçă.

— Неушлӗ, каллех çекретри картин?..

Зоçă умӗнче каллех чикӗри картин.

...Тигăр кăшт пытанса тăчӗ. Ку вăхăт—ӗмӗртен те вăрăм.

— Ес, Кача-мучăсем? Шика тавршӗ мар-и?..

---

## Уйав кунӗсем Шупашкарта



Парти Чăваш Обкомӗн отв. çекретарӗ Ç. П. Петров йулташ Горйкири „Красное Сормовă" савăтран автономи уйавне килнӗ ватă рабочи-ударниксем—ӗç паттăрӗсем хушшинче. (*Христофорăв фото-ӳкерчӗкӗ*)

— Да!—хăйуллăн ответлерĕ тыткăна лекни—Унтри. Ес кам пултăн-ха? Сассу—ачари ту... ă...

— Ĕ-р-р-ĕ!

Сасса хирĕç пăшал. Тигăр хыçалта. Çывăхрах... Вилĕм куç умĕнчех. Хăвăртрах...

— Вырт!—сасă тухса кайат̆ Шика адрĕспе.

Куç мушкăна шырат̆. Мĕлке çывхарат̆... Ак каллех... çухалат̆... çуталат̆... Куçсем пĕр тĕлте шăнчĕç... Çĕр çумнеле... Кĕтме çук! Курок...

Пăшал сасси тишĕн йанăраса çырмана сикрĕ. Застава тревогă çинчен хыпарларĕ.

Пысăк хура мĕлке вăйран çўлеле ыткăнат̆, сывлăш чĕтренсе илет... Штык вĕçĕнчех хырăмпа çатăлтатат̆... Чĕрнесем тăпрана чаваççĕ... Пысăк çăвартан—сывлăш... шăлсем кăчăртатаççĕ... Хускалмаст̆...

Хыçалтан пăшал перĕнет... Пĕçĕ пĕçерсе илет... Шика «тус» револ̆вĕртен печĕ... Йулашки вăйпа затвор уçăлса хупăнат̆... Курок... Вырăнсăр... «Тус» ăна амантса тарчĕ.

* * *

— Тусăм, мĕнле телейпе?!.—терĕ ăна тахăшĕ, ыталаса тытса. Зоçă кăртах сикрĕ.

— Петтă!—иккĕленсе кăмăлларĕ Зоçă, хăйĕн вырăнне йулнă çменă маçтăрне.—Ырă ир! Уйăрса илейместĕп!.. Мĕн пулнă спре? Савăт чирлĕ! Есĕр мĕне пăхатăр? Каçхи çменă плана 70 процент тултарнă... Есĕ те тултарайас çук... Мана, сан пекех, екстракт пĕçерес ĕç маçтăрне, техника—ку картин пăчăлантарат̆...

— Мĕн ара, Зоçă, мĕн?

— Çĕçĕсене 5 миллиметрла лартнă, савалат̆ вĕт, турамаст̆. Дуффузинче—ĕç пăтранчăк. Выпăркăна пăс çитмест. Çав вăхăтрах, пăхăр диффузорсенчен пăс тула кайат̆. Кестнĕр помписен шатунĕсене йурпйех кĕскетнĕ. Уçлама ĕлкĕреймест. Кестнĕрсем выçă. Сисетне—выçă?!. Кунта—вăрттăн «ĕç» пур.

— Арра, механик помошникĕ, механик отпускра пулнăран пулас, иртнĕ ремонтра шатунсене хăйех улăштарттарчĕ.

— Арра? Мĕнле Арра вăл?!. Пĕр хушаматлă?!.—чĕтренсе илчĕ Зоçă. Хăй çав хушăрах çекретра тупнă ĕнентерў хучĕн копине кĕсйерен кăларса пăхрĕ.

Машин отделенинчен тухнă «механик» трубопроводсене пăхса пырат̆. Çывхарат̆.

— Есĕр механик-и? Мĕнле телейпе?

— Я не понимаю. Я—механик...—унăн çăварĕнчи ылттăн шăл йăлтăртатса илчĕ.

— Аферист! Шика чĕппи!

— Я не знаю чего вам надо... Я не Шика, а Арра... Вы обознались.

— Паллатăп, ан лăпăртат!—револ̆вĕре кăларса кăкăр умне тытрĕ Зоçă.

— Ты?! Опять! Не шути!—вăл та кестнĕр хыçне вăрăнса, хăвăрт наганне кăларат̆.

Çекундсем. Куçсем шашкăсем пек вĕлтĕртетрĕç. Петтă, çменă маçтăрĕ, Шика аллинчен револ̆вĕре сасартăк çапса ўкерет. Аппаратчицă ăна тытса илет.

— Хал̆ ĕнтĕ, кайаймастăн,—терĕ Зоçă.—Зоçă «тусна» çекретра аванах паллаштартăн.

Аппаратчицă ĕçне пăрахмарĕ. Петтă района телефонпа пĕлтерчĕ.

— Зоçă!.. Есĕ-и-ха?!. Тусăм!..—йăпăлтатрĕ Шика-Арра.—Пĕчĕк чухне туслă ўсрĕмĕр... Каçар! Хам та ўкĕнетĕп, чикĕре йăнăш тухрĕ... Сана палласа илеймерĕм...

— Застав аллине кĕрес мар, терĕм, тесем. Тигăрпа çапăçнă ўтĕмре ухмаха вĕлерсе тарма телей пулчĕ, те. Ма-ха савăта сийенлеме тытăнтăн?

— Йăнăш... Зоçă, каçар...

— Аçу ăçта?

— Ăçта пулнă—çавăнтах.

— Чикĕ урлă каçса килес умĕн мĕн хушрĕ?

— Хушкаларĕ... Никама пĕлтермесен, атте пытарнă ылттăна тупса çурмала валеçеттĕмĕр... Еп ылттăн шырама килтĕм...

— Санăн ылттăну—тигăр куçĕ! Армансенче, кирпĕчĕ, тукăн сарайĕсенче ĕçленĕ аçун тарçисен тарĕ, йунĕ. Еп укçаран хаклăрах, ан та ўкĕтле...

Халлап таталчĕ. Зоçă ку ĕçпе Шалти ĕçсен Халăх Комиссарпачĕн районри уполномочĕннăйне кĕскен паллаштарчĕ. Савăтри ĕçе йĕркелесен, тĕпшпех каласа пама пулчĕ.

* * *

Йăвăр айăп. Намăсран шикленсе ку вăхăтчен никама та пĕлтерме хăйайманччĕ.

Тинех ăш уçălат̆. Тинех сăп-сăпат кĕрет. Зоçă хăй айăпне спрес кăмăлпа тимлĕ ĕçе кўлĕнет.

Ку ĕçе пĕлсе çитсен савăт пĕр çын пек мобилизациленет. Пурте ура çинче. Пăсăксене часах тўрлетеççĕ. Техникă процесне тивĕçлетеççĕ.

Еçе йĕркелесе çитерне хыççăн Зоçă кестнĕр умне пырса ларат̆. Вăл çекретран çăмăр витĕр йĕп-йĕпе пулса, йулташĕ мăйĕнчен çакăнса таварăннă чухнехи пекех, лачкам тара ўкнĕ. Кестнĕр тулли. Вĕрет. Унăн анинчен вĕçĕмсĕр çăра екстракт йăрлатса анат̆. Михĕ хыççăн михĕ тулат̆. Çўпĕрен тасатнă пăхăр трубасем йăлкăшаççĕ. Ытарма çук савăк вĕри кестнĕр! Зоçă ачана ыталанă пек, ăшă михе ачашлат̆. Йенле йурату! Йепле хаваслăх!

Гудок тепĕр хут сасă париччен пĕтĕм вăйа хунипе план тулат̆. Зоçă çменăран рабочисемпе пĕрле тухрĕ. Вăл çав тери савăнăçлă. Унăн хăйусăрлăхĕ путланнă. Унăн ăшĕнче хаваслăх. Вăл çак историне тĕплĕнех каласа парас шухăшпа, районри уполномочĕннăй çурчĕ йеннеле утрĕ. Симĕс чăрăшсем çинчен тăкăнакан пас çула çемçетрĕ.

Оренбург 1934—35 ç.ç.



В. МАКАРĂВ
худ. картинĕ.

Йалти актив ıса вĕлерни

## Шупашкар автономи уйавӗ тӗлне









Хресчен ҫурчӗ
Поликлиникӑ
Ҫыхӑну ҫурчӗ

*(Сойузфото)*

Пичет ҫурчӗ

*Христофорӑв фото-ӳкерчӗкӗ*



## Фацелийа

— Фацелийа аван чечек; хуртсем унтан пыл нумай илеççĕ,—тесе, пирĕн учитĕл калашпе илтнĕ епĕ хам шкулта вĕреннĕ чухне.

— Аван, хитре, пыллă чечек пулмасăр; кĕрен, тутлă шăршлă чечек ĕнтĕ вăл, фацелийа текенскер.

Апла мар иккен; фацелийа кунта ĕлĕк пулман; пысăк, кĕрен чечек мар вăл. Чăнах та фацелирен хуртсем пыл нумай илеççĕ, тет вара.

Америкăра, çурçĕртинче, Калифорнийа йатлă штат пур. Фацелийа малтан çавăнта ӳснĕ. Фацелийа Йевропа килни нумайах пулмаст. Вăрнар районĕнче кăçал Турхан колхозĕ фацелийа акса пăхнă. Фацелийа чечеке ларасси вăрăма пырат. Ытти чечек пек мар, ун чечекĕ час сӳнмест. Хурт вĕçме çанталăк сивĕ мар пулсан, ун çинче хуртсем сĕрлеççĕ кăна. Пĕр гектар аксан, хуртсем фацелирен 20—40 пат пыл илме пултараççĕ. Кирек ăçта та акма йурат ăна, фацелийа çĕр тиркемест. Типĕ, уйар çанталăкра, шăрăхра та ун чечеккинче пыл нумай пулат.

Кун çинчен епĕ екскурçире, сĕотра пĕлтĕм; Чăваш республикинчи колхозсен утарĕсенче хурт пăхас ĕçе туса тăракан ударниксен çентаберĕн 16—19-мĕшĕнче екскурçи пулчĕ,—Йепреçпе Парачкав хушшинче Сăр вăрманĕ тăрăх. Колхозран колхоза, утартан утара пăхса, курса, сăнаса çӳрерĕç хурт ĕçĕн ударникĕсем. Епĕ те вĕсемпе пĕрле çӳрерĕм. Аслă вăрман, сĕм вăрман, пыллă вăрман, тесе калас пулат унти вăрмансем çинчен. Хурт, выĕăх усрама йави çав. Колхозниксен пурнăçĕ унта та пит ӳссе кайнă.

Сĕот ударникĕсем хăш-хăшĕ таçта-таçта çӳресе курнисем пур.—Ниçта та, колхозниксем пăхнă пек, лайăх пăхнине курман епĕр,—теççĕ.

Çентаберĕн 20—21-мĕшĕнче Парачкавра вара ку сĕотăн ударникĕсем хурт ĕçне социалисăмлă йĕркепе, наука йĕркипе йепле-йепле ку вăхăтра ĕçлесе тăнă пирĕн республикре, малашне йепле ĕçлесе туса пымалине, тĕрлĕ йенчен çитĕнӳсене, çитменлĕхсене сӳтсе-йавреç.

Хурт ĕрчетни социалисăмлă хуçалăха тем тери пысăк усă тăват; пылĕ çиме тутлă, сиплĕ, сутма хаклă; хурт йышлă пулсан, тĕрлĕ çимĕç тавращĕ пит тухăçлă, ăнăçлă пулни пылран тата ытларах, хаклăрах усă кӳрет.

***И. Тăхти***

# Çамрăк сăвăçа

***Ф. Ванин***

Хаĕ анчах ӳсекен поетсем çине
Критиксем пăхмаççех пĕр пек,
Сакăр критикăн сакăр рецензийĕ
Пултараймĕç чупма пĕр йĕрпех.

Малтанах хăшĕсем сана пӳлĕçĕ,
Ес çавах сăмсуна ан ус.
Пайанхи йăнăшсем санăн пулĕçĕ
Ыранхи çитĕнӳшĕн—навус.

Сан çинчен виреле статйасем тухсан
Ан çилен, ан шăртлан пĕртте.
— «Вĕренер-ха мĕн пур пек вăйа
пухса—
Тӳрĕ çул çине тухăпăр»,—те.

Йе тата, сăввусен хаклăхне кура,
Ырлакан статйасем тухсан,
Сăмсуна каçăртса, сарă, йе хура
Кăтруна ырласа, ан мухтан.

Нумайрах рифмăлас, тесе, ан антăх,
Лайăхпа йапăха—палла,
Пуртăпа акăш-макăш вартарăн-тăк—
Савапа лайăхрах савала.

Лартăн сăвă çырма-тăк—ăна пула
Чĕрӳпе ес кăварлăн çун.
Йе çырмастăн пулсан, кĕнеке вула—
«Тĕпĕсем» çирĕпленччĕр пуçун.

Вулани çырнипех те çителĕксĕр—
Хăв ударник пулса ĕçле.
Паттăрла ĕçӳсем сан çитсе лекчĕр
Кив тĕнче майне çивĕч хĕçле.

Пурнăçран ес кайа тăрса ан йулсам,
Чи малти ретсенче кĕреш.
Вилĕмпе пурнăç—çывăх туссем
пулсан,
Пурнăçпа кĕрешӳ—йĕкĕреш.

# Шурă тутăр

***Усли Ваçлейĕ***

Савнă тусăм
Манăçа ăстан йултăр,
Астăватăп хамăн савнине...
Асăнмалăх
Патăн есĕ тутăр
Ху мана ăсатнă каçхине.

Вăл каçа та
Лайăх астăватăп,
Нихăçан ăна еп манас çук.
Шавламастчĕ,
Шăпчĕ аслă Атăл
Иксĕмĕр чунтан калаçнă чух.

Пушар пек
Çунатчĕ çавракурăм,
Пурçăн йевĕр капăрччĕ инçет.
Уйава тухан хĕр пекчĕ хурăн,
Шукăĕ шурă тумччĕ
Ун çинче.

Атăл шывĕн хĕрринче ларатчĕ,
Çырана вигетчĕ çӳçĕпе.
Çил унпа выĕа-выĕа кайатчĕ
Тус хĕрне
Час манакан йаш пек.

Атăлта
Чӳхенкелетчĕ уйăх,
Улах чух, каçпа шыва кĕрет.
Çăлтăрсем те
Сурăхсем пек шухă,
Чĕтресе тăратчĕç тӳпере.

Сывлăша
Пĕр усă сасă çурчĕ,
Вăл вăратрĕ
Лăпкă тавраналa.
Илсе карĕ Камă пăрахучĕ,
Тусăмран вăл уйăрчĕ мана.

Епĕ лартăм.
— Сывă пулăр,—терĕм,—
Сывă пулăр тепĕр çулчченех.
Ун чухне—
Ес темшĕн тӳсеймерĕн,
Шывлантартăн чакăр куçсене.

Епĕ сисрĕм:
Есĕ пит хурлантăн,
Кичемленчĕ манăн та йаш чун.
Темшĕн хурланаççĕ кирекçан та
Мăшăрне
Çула ăсатнă чух?

Шурă тутăр
Патăн йуратушăн,
Ман йатпах тĕрленĕ тĕррине.
— Амансассăн
Çакăнпа çых, тусăм,
Вăл часрах тӳрлетĕ, терĕн ес.

Епĕ санăн тутăрна усратăп,
Уссăрах ăна сайа йамасп.
Халĕ хуралта
Сывах тăратăп,
Хуралатăп çĕрĕм-шывăма.

Пулĕ вăрçă.
Çавă вăрçăра еп
Пулăп хăраман артиллерист.
Пуĕă темлерен ӳте шăйрайĕ,—
Тин варланĕ
Сан парнӳн тĕрри.

Вăл унччен
Манра тасан упранĕ,
Вăл варланмĕ ăпăр-тапăрпа.
Ма тесен,
Суран çыхмашкăн панă,
Сурана çыхаççĕ шурă тутăрпа.

# АТӐЛ ТА КУНА ХАЛИЧЧЕН КУРМАН*

И. Тӑхти *Ескиз*

Хусана, Сӗвене, Сӗнтӗр-вӑррипе, Шупашкара, Чикмене, Ваҫҫиле т. ыт. ҫӗре те Мускав кнӗазӗсем, вӗсен воеводисем 1552-мӗш ҫултан Атӑл тӑрӑх чиркӳсем, монастырсем, крепӑҫсем, пит хӑйулӑ тӑва-тӑва пынӑ, приказсем лартнӑ.

Мӗн ӗлӗкрен, авалтанах, Мускав кнӗазӗсем, Питӗр патшисем, пуйансем, мул хуҫисем, хулиганисем, елекҫӗсем, ултавҫӑсем тӗрлӗ-тӗрлӗ майпа Атӑл тӑрӑх та, тутар, мари, мӑкшӑ, чӑваш ӗҫхалӑхне мӗн чул ҫаратнӑ, мӗн чул хӗненӗ, вӗлернӗ, асаплантарнӑ хӑйсене хирӗҫ тӑракансене, хӑйсене пӑхӑнманнисене. Тӗпри, кунти пуйансем, мул хуҫисем «ыр ҫын» йатлисем те, лешсемпе пӗрле, алла-алӑн ҫавтӑнсах, хура сӗлӗх пек, ӗҫхалӑх йунне ӗмсе кӳпӗннӗ; хура ҫӗлен пек, хӑшӑлтатса-авкаланса, хӑратса, вӑтамсене, чухӑнсене, ҫын вырӑнне хумасӑр, мӗн тери асап кӑтартнӑ. Ҫав мӑшкӑл—етеме выҫӑхран кайа хуни, ӗҫхалӑхне ҫав тери ҫаратни, мӗскӗн ӗҫхалӑхӗнчен лехлетсе кулни—пӗр кунӑ, ик куна мар, темиҫе ӗмӗре пынӑ ҫав мӑшкӑл. Мул хуҫисен, кнӗазсен, патшасен, йанралсен, улпутсен, дворенсен историкӗсенчен пӗри—Елпатйевски, Чар Иван Хусана тытса илсен, мӗнмӗн туни ҫинчен ҫырнӑ чух, ҫав Мускав кнӗазне ырласа, ҫапла каласа, ҫырса хурат: «в Казани были построены православные храмы и были приняты меры к обрусению края» (учебник русской истории, 9-е издание,—Петербург, 1904 г.).

Тутар, чӑваш ҫав «православи», обрусени, експлуатаци «ырлӑхне» чӑтаймасӑр, тарӑхса таҫти-таҫти ҫӗре тухатуха тарнисем, йут ҫӗршыва куҫса, Раҫҫейрен тарнисем те нумай пулнӑ (Константинопӑлӗри, Истампӑлри чӑвашсем). Вӑл ӗмӗрте ӗҫхалӑхӗ «ырӑ курни, телейлӗ, татуллӑ, асапсӑр, тутӑ, мӑшкӑлсӑр, хисепре» пурӑнни ҫинчен епӗр пурне ҫырса та пӗтерес ҫук. Сул пӗрени ҫине йупасем лартса, йупа ҫинчен йупа ҫине урлӑ-урлӑ каштасем хурса, Пӑкачав вӑхӑтӗнче Пӑкачав майлӑ пулса, улпутсене хирӗҫ пынӑ мари, вырӑс, чӑваш ӗҫҫыннисене сухан майи пек, ҫав каштасенчен ҫака-ҫака, Атӑл тӑрӑх йухтара-йухтара йани сахал пулни вара?

Капиталиссем пуйа-пуйа вӑйланнӑҫемӗн, вӗсен експлуатаци шухӑшӗ, експлуатаци ӗҫӗ те вӑйлансах пынӑ.

1906-мӗш ҫулта чӑвашла хаҫат—«Хыпар» тухнӑ вӑхӑтра Хусанта «Казанский телеграф» йатлӑ монархисла хаҫат тухатчӗ дворенсен, улпутсен, пупсен, славйанофилсен «мухтавлӑ, хисеплӗ» хаҫачӗ. Ҫав «Казанский телеграф»-ра чӑвашла хаҫат тухни ҫинчен, вӑл ӗҫе «ырласа», чӑваша «йуратса» ҫапла ҫырнӑччӗ:

> «Российский гражданин.
> Чуксарский дворянин
> Продает «Хыпару»
> За копейку, пару!!.»

«За веру, царя и отечество»-шӑн вӑрҫнӑ вӑрҫӑсен «уссипе» ӗҫхалӑх «ырӑ» курнине аса илсен... Ҫапла пулнӑ авал, ҫапла пулнӑ ӗлӗк, кнӗаз, патшасен, дворен; пуп, пуйансен саманинче пурӑнма!

Пур-ха тӗнчере асапланса, капитал нуштине тӳссе пурӑнакан ӗҫхалӑхӗсем,—хӗвеланӑҫ йенчи капиталисла патшалӑхсенче, хӗвелтухӑҫ йенче те сахал мар капитал пусмӑрӗнче пурӑнакансем. Ҫав капиталисла, империалисӑм патшалӑхӗсем пайан кун та, хӑйсен мӗн пур вӑйне, хастарлӑхне хурса, татах вӑрҫӑсем тапратса йама тӑрӑшаҫҫӗ. Мула, пуйанлӑха харпӑрхӑй аллине ҫавӑрса, пухса илесси, йатлаҫмасӑр, хирӗҫмесӗр, вӑрҫмасӑр, пусмӑрламасӑр, йун тӑкмасӑр никҫан та пулман, капиталиссем пуйасшӑн, пысӑкран пысӑк, тата пысӑк капитал харпӑрхӑй аллине йарса илесшӗн хаҗхи саманара тавлашни етем халиччен курман, тем тери хӑрушӑ вӑрҫӑ тапратса йама пултарат. Капитал, империалисӑм патшалӑхӗсем ҫав вӑрҫа ырми-канми хатӗрленеҫҫӗ,—ҫӗр ҫинче, ҫӳлте, сывлӑшра, шыв айӗнче, шыв ҫинче, тем майпа та, таҫта та етеме пӗтерме майсем, орудисем, аппаратсем, тем те пӗр те тупнӑ, хатӗрлесе хунӑ; етеме пӗтермели майсем, хатӗрсем тата ҫӗнӗрен те шыраса, тупсах пыраҫҫӗ кашни кун. Анчах тӗнче тилхепине пӗр пролетариат ҫеҫ ҫирӗп тытса пыма пултарат.

Пуринчен ытла империалиссем пирӗн Совет Сойузне кураймаҫҫӗ. Нимрен ытла пирӗн ӗҫхалӑх патшалӑхне, рабочисен, колхозниксен патшалӑхне пӗтересшӗн тӑрӑшаҫҫӗ вӗсем.

Буржуази, тӗн, наци пусмӑрӗсене коммуниссен парти йертсе пынипе пирӗн рабочи клас Октаберте тӗпӗ-йӗрӗпе тӑпӑлтарса ывӑтрӗ. Капитал пусмӑрӗ пӗтрӗ, наци пусмӑрӗ пӗтрӗ, тӗн сӗрӗмне сиртӗмӗр епӗр; патша саманинчен йулнӑ ытти киревсӗр йапаласене те пирӗн пролетари патшалӑхӗ пӗтерсех, ҫӗнтерсех пырат; ӗҫхалӑхне йурӑхлӑ, рабочисене, колхозниксене кӑмӑллӑ, телейлӗ йӗрке туса пырат. Ҫак пирӗн пролетари патшалӑхӗ куллен-кун вӑйланни империалиссене шӑл ҫемми мар, хӑраҫҫӗ вӗсем хӑйсене тӳнтерсе йарасран.

Хӑрамала ҫав, хӑрамала вӗсен, вӗсен патшалӑх йӗрки, мӗн пур пурнӑҫ йӗрки ҫапла—пӗрне-пӗри пӗтерсе, пӗрпӗрипчен мула, йапалана, кирек мӗне тыта-тыта илсе, пӗри, йе пӗр ушкӑнӗ ҫийеле тухмала, ӗҫхалӑхне таптамала, ӗҫхалӑх йунне вӗсен ӗҫмеле; ӗҫхалӑх нушта курмала, капиталиссем ҫеҫ пӗр-пӗрипе харкашса, тавлашса, хӑйма ҫимеле, пурнӑҫ сӗткенне ӗммеле. Ҫак йӗркепе пурӑннӑ та-ха вӗсем ку таранччен. Пусмӑр йӗркипе пурӑннӑ та-ха вӗсем, ӗҫхалӑхне пусмӑрласа.

Совет йӗрки—урӑхла йӗрке, ӗҫхалӑхсен ирӗклӗхӗ йӗрки. Ҫавӑнпа капиталиссем Совет Сойузне, тӗрлӗ халӑхсен социалисӑмлӑ ирӗклӗ Сойузне кураймаҫҫӗ.

◆◆

Атӑл сарӑлса йухат.

Атӑл ку айкки сӑртлӑ; айлӑм, сӗвек сахал ку йенче. Атӑл леш айкки улӑх, ҫаранлӑх, хӑвалӑх, леререх вӑрманлӑх.

Ку йенче, ку тӗлте Шупашкар. Ку тӑрӑхра Чӑваш республики.

Леш йенче, шалта, вӑрман урлӑ, Йошкар-ола. Вӑл таврара Мари облаҫӗ.

Атӑл тӑрӑх анатала Хусан, Тутар республики.

Тӑвала Горйки хули—пролетариат, промышлӗннӑҫ.

Хӗвеланӑҫӗнчен Хӗвелтухӑҫнеле, Ҫурҫӗртен кӑнтӑрланала сарӑлса выртат пӗр ҫӗршыв—Совет Сойузӗ—170 мӗлйун халӑх пурӑнат кунта; тӗрлӗ чӗлхелӗ, пӗр патшалӑх, пролетари патшалӑхӗ. Унта та, кунта та, йӗритавра хапрӑк-савӑтсем; капиталиссен промышлӗннӑҫӗнчен мала та мала иртсе пыракан промышлӗннӑҫ, пролетариат промышлӗннӑҫӗ. Тинӗсрен тинӗсе ҫити, океанран океана ҫити колхозниксен уй-хирӗ, пула-пыран тырпул, пиҫсе-ҫитен ҫырла-ҫимӗҫ, ӳсе-пыран выҫӑх-чӗрлӗх, улма, ҫырла пахчи, хуртлӑ пыллӑ утар-утар, вӗҫӗ-хӗррисӗр ҫӗршывӗ, етем пырса кӗмен вӑрмансем—Совет Сойузӗн, пролетариатӑн ҫӗршывӗ, пролетариатӑн пурлӑхӗ ҫавӑ. Пролетариат ҫӗрӗнче чул кӑмрӑкӗ, нефтӑ, тӗрлӗ руда, пӑхӑр, йӑс, тӑхлан, свинец, кӗмӗл, ылттӑн, хаклӑ чулсем т. ыт. те капиталиссем кӗвӗҫмелӗх, империалиссем хапсӑнмалӑх пур пирӗн ҫӗршывра.

---

*) Чӑваш республики 15 ҫул тултарнине асӑнса ҫырнӑ.

◆◆

Атăл, аслă Атăл. Мĕн курман ес? Атăл, Дон, Днепр, Урал, Иртыш, Обь, Лена, Енисей, Индигирка, Амур. Мĕн курман есĕр, хаклă, аслă шывсем? Есĕр тем те курнă,—темиçе тĕрлĕ халăх темиçе пин çул хушши куçса, унта та кунта, урлă та пирлĕ тарса, пытанса, çапăçса, çĕмĕрсе, вĕлерсе çÿрекенсене шыва путарса вĕлернисене курман мар есĕр, нумай курнă есĕр.

◆◆

Ай мучи, Аслă мучи. Атăл мучи. Сан тăрăх тура, сан тăрăх анатра, сылтăмра, сулахайра, йĕри-таври çĕршывра пурнакан ĕçхалăхне çитĕлĕклĕ, социалисăм пурнăçĕ туса пама коммунисĕсен парти йертсе пынипе Совет Сойузĕн пролетариачĕ сана та, тĕллĕн-тĕллĕн пĕвесе, йалхуçалăх, транспăрт, индустри ĕçĕсене хисепсĕр вăйлатса йама шутласа хунă, вăл ĕçе тытăннă ĕнтĕ боľшевиксем.

◆◆

Сăрт, Шупашкар сăрчĕ; икĕ сăрт хушши айлăм, сĕвекле вырăн. Ку сăрт та чылай пурнăç курнă пулас ĕнтĕ. Вăрман пулнă;—каснă ăна; вĕтлĕх ÿснĕ; ăна та каснă; йăвăç тымарĕ хăрнă; Атăл хумĕ çапнă; сăрт та ишĕлкелесе пынă.

Ĕмĕр-ĕмĕр пурăннă пулсан та, пайанхи пек кун курман есĕ, сăрт тете!

◆◆

Хĕртсе хĕвел пăхат; уйăр, шăрăх çанталăк; Атăл çинче, сăрт çинче, çÿлĕ те çÿлĕ, ăмăртмала вĕçеççĕ, çаврăнаççĕ, чĕкеçсем. Сăртра йăмра. Йăмра турачĕ çинче ларат пĕр чĕкеç; çунатлапат, чĕвĕлтетсе йурлат:

—«Ĕреветлĕ, теветлĕ,
Хÿри вĕçне туй килнĕ;
Сирĕн ĕçсем тивлетлĕ;
Çĕнĕ пурнăç чăн килнĕ»—,
тенĕ пекле туйăнат.

Савăтсем сас параççĕ, кăшкăраççĕ савăкла.

Хуларан халăх куçса тухат Атăл хĕрне. Йурăсем йурласа, музыкă каласа, йалавсем çĕклесе, ĕретĕн-ĕретĕн утса, пристăнђрен улăхакан çулăн ик йенне тÿп-тÿрĕ тăратăра тухаççĕ.

— Çитеççĕ, килеççĕ пулмала,—тесе, Атăл çине тăвала пăхаççĕ.

Йарăнса тухрĕç хула çинчен Атăл çине йеропланcем, йарăнса тухрĕç кĕрлесе.

Малала та малала
Питĕ хăвăрт каймала,
Пирĕн кайа йулас мар,—
Тăшман кулли пулас мар.
Пурте лайăх пĕлетпĕр,—
Çитес çĕре çитетпĕр.
Тĕпком йертсе пынипе,
Сталин йулташ хушнипе
Пире тĕнче çитеймĕ;
Буржуази çĕнеймĕ;
Пулас-пулас, пуласах,
Пирĕн паттăр пуласах,—
Мала, мала тухатпăр,
Чăн-чăн герой пулатпăр.
Хамăр епĕр вăрçас çук;
Епĕр вăрçă пуçлас çук;
Тăрăр хытă астуса!—
Ĕçхалăхне йунаса
Пире килсе тапăнсан,
Епĕр вăрçма тапратсан,
Асăнмалăх куратăр,
Ĕмерлĕх тĕп пулатăр.

Йероплан, музыкă, йурăсен сассине тăнласа пăхсан, темле, çапла çемĕ илтĕнĕ пек туйăнат.

Çап-çутă, тап-таса автомобилсем, пристăнђ умне чаана, йĕркерен тăра-тăра тухаççĕ.

Хула урамĕсене, çурт-йĕре ерешлесе, пристăне чечеклесе, симĕслетсе, илемлетсе тухнă. Халăх та пайан туйшилĕкрен те капăр, тĕрленĕ ерешлĕ тум тăхăннă.

Хĕр-хĕрарăмсен хура, çирă, сарă çивĕтр пурçăн лентăсем йăлтăртатса выľаççĕ.

«Да, да, право, удивительные дела всетаки», текелесе, ик ват старик кăвак сухалĕсене шăлкаласа, йусанса, «в жизни не видел столько народу», тесе пăхса тăраççĕ.

Моторлă кимĕсем, пĕчĕк пăрахутсем Атăл çинче йарăнса çÿреççĕ, кĕтеççĕ хăнасене.

◆◆

Вĕçĕмсĕр халăх тухат.

Шап-шурă пăрахут туран анат. Аппĕ-амăшĕ ачи-пчине кĕтнĕ пек, ачи-пчи аппĕ-амăшне кĕтнĕ пек, тăван-тăвана кĕтнĕ пек, кĕтеççĕ вĕсене, хавасланса кĕтеççĕ вĕсене пайан кунта, ыран унта. Совет Сойузĕнчи ĕçхалăх, тĕнче ĕçхалăхĕ, тĕнчери ĕççынни, кашни ĕççынни хăй куçĕпе хăй савса пăхасшăн вĕсене.

Пăрахут илемлĕ сасă парса, пристăнђ патнеле çаврăнчĕ, йарăнса пырса, пристăнђ çумне пырса тăчĕ.

◆◆

Музыкă вылђат. Халăх урра кăшкăрат. Хăнасем тухаççĕ. Пирĕн республикă ĕçĕсене йертсе пыракан йулташсем алă тытса, тăванпа тăван пек, ыталанса, хăнасемпе чуп тăваççĕ.

Урра, йулташ Бобров! Урра, йулташ Ľапидевски. Урра! Йулташ Доронин! Вăйлă, хавассăн, савăнса шавлат халăх. Ейдеман йулташ! Урра! Алă çупаççĕ. Хăнасене чечексем параççĕ.

Çÿлте йеропланcем, чĕкеçсем çаврăна-çаврăна, чаплă хăнасене хисеплесе, йарăна-йарăна вĕçеççĕ.

Челÿскинцăсене урра! Совет Сойузĕн геройĕсене урра!

Чеç парса, халăх хушшинче утса, хăнасем утаççĕ Атăл хĕрĕнчен, Хĕрлĕ плошчăте кайаççĕ халăхпа пĕрле.

Правителĕствă, Обком бÿро членĕсем, хăнасем трибунă çинче, вăйлă, хастарлă, паттăр çынсем; темиçе пин ĕçхалăх Хĕрлĕ плошчăтре.

Пайанхи аслă митинга, Чăваш ĕçхалăхĕн автономи уйавне Совет Сойузĕн чаплă мухтавлă челÿскинцисенчен—Бобров йулташ, Совет Сойузĕн чăн чаплă геройĕсенчен иккĕшĕ—Ľапидевски йулташпа Доронин йулташ, Совет Сойузĕн Осоавиахим председателĕ Ейдеман й-ш, Мускав облăçĕн Осоавиахим председателĕ Ремесникци йулташ килни, чăваш ĕçхалăхĕн пысăк уйавне çак чаплă хăнасем килни, вĕсем пире хапăл туни халĕ те, малашне те, калама çук паллă, чаплă, ĕмĕр манми ĕç.

Чăваш республикин парти ĕçне йертсе пыракан Й. А. Андрейĕв йулташ коммунисĕсен парти, Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн республикă çитĕнĕвĕсене, малашнехи умри ĕçсене аслă уйавра кăтартса, хăнасене Чăваш Обкомĕнчен боľшевикла салам калани, Чăваш республикин правителĕстви ĕçĕсене йертсе пыракан А. Х. Харитонăв йулташ чăваш ĕçхалăхĕн хуçалăх, промышлĕннăç, транспăрт, куľтурлăх октăбĕртенпе мĕн чул мала та мала кайса пынипе, умри ĕçсене малашне те рабочисем, колхозниксем боľшевикла, ударлă ĕçлесе пырса, Совет Сойузĕнче малти, тата хисеплĕрех вырăна йышăнас кăмăл, хăватлă, ударлă кăмăл кунран куп вăйлăрах курăннине, çавăнпа рабочисен, колхозниксен çителĕклĕ пурнăçĕ ÿсех пынине асăнса, ĕçхалăх ÿсĕмĕшĕн савăнса, Анани Харитонăвич хаклă хăнасене хĕрÿлĕ салам калани; Бобров йулташ калани.—Пирĕн карап шыва путрĕ: хамăр пăр çине анса йултăмăр; çурçĕр çанталăкĕ сивĕ, тăман, тĕтре; çĕнĕрен-çĕнĕ тем çÿлĕш пăр каплана-каплана пырат; пайан-ыран пире океан тата шаларах та илсе кĕрсе кайма пултарат, апла пулин те, епĕр, челÿскинцăсем, парти,



А. Ф. МЕСНИКОВ худ. картинĕ. **Çамрăксен бригади утă çулма кайни**

правительствă хушнипе туса пынă, Совет влаçĕ, рабочисем, колхозниксем, ĕçхалăхĕ парти йертсе пынипе, Сталин йулташ хушнипе ĕçхалăх пире çăлассине епĕр ĕненсе, шансах тăнă. Большевиксен ĕçĕ, Çĕпĕр тавра пăрлă океанпа çул уçасси, пирĕн ытти чаплă ĕçсемпе пĕрлех, сирĕн ĕç, Совет Союзĕнчи тĕрлĕ-тĕрлĕ чĕлхелĕ ĕçхалăхсен ĕçĕ, пулса тăрат. Чăваш ĕçхалăхне, рабочисене, колхозниксене, тӳрĕ йединоличниксене пайан, сирĕн автономи уйавĕ кунĕ, пайан епĕ челӳскинцăсенчен сире большевикла хĕрӳлĕ салам калатăп. Казалось, что гром аплодисментов, восторженная игра оркестра и пр. внешние знаки, показатели под»ема человеческого настроения ни в какое сравнение не шли с тем, что происходило внутри, в сердцах здесь присутствующих; а в сердцах здесь присутствующих происходили сдвиги, образования; новые сдвиги, новые образования,—пролетарские по содержанию, интернациональные по форме; сдвиги и образования для новых побед на фронтах труда, культуры, техники, науки и на фронтах грядущих классовых боев. Чĕлхе-çăвар çавăрăнмаст, сăмах çитмест, кăмăл, ăшчик, чĕре шухăшĕсене каласа пама.

Не высокомерная команда военоначальника, не ружейные залпы, не канонада пушек, не рокот от взрыва снарядов, не дым и не газы ядовитые, а неопровержимое, огнеупорное большевистское убеждение и братское, приветливое слово производит и формирует эти сдвиги и образования. Ӳрăсла, чăвашла кăна мар, çичçĕр çитмĕл çичĕ чĕлхепе калас килет пайан ун çинчен.

Капиталиссем пĕр-пĕрине тавлашса, харкашса, тĕнче пуйанлăхне пĕри те пĕри тата ытларах йарса илесшĕн рабочисене, колонисенчи тĕрлĕ-тĕрлĕ ĕçхалăхсене тата хытăрах хĕсме майсем шыранă вăхăтра, Германире, Австрире Гитлĕрсен «ырă кăмăлĕпе» йун, йун тăкăннă вăхăтра, пайанхи кун, 10-мĕш ийулĭри Чăваш ĕçхалăхĕн автономи уйавне, рабочи клас ĕçĕшĕн хăйсене пĕр хĕрхенмесĕр, ĕçхалăхне канаçлă, кăмăллă телейлĕ, кулĭтурăлă, илемлĕ, çителĕклĕ пурнăç туса памашкăн вилĕмрен те хăраман сыпсем, паттăр геройсем çакăнта Шупашкара та, чăн ырă кăмăлпа пире хисеплесе килни мĕне-мĕне пĕлтерни не пурне каласа та çитерме çук; челӳскинцăсен, Лĭапидевски, Доронинсен ĕçĕсем, наукă ӳсĕмĕ, техникă çитĕнĕвĕ, кулĭтурă ĕçхалăх хушшине сарăлни, лăпкă, телейлĕ килĕшӳлĕ, вăрçăсăр пурнăç тăвасси—пурте вĕсем пĕр коммуниссен парти, парти ĕçĕсене йертсе пыракан Сталин йулташ аллинче кăна.

Çакна есĕ, Атăл мучи, ĕлĕк, Октăбĕрччен, куçкĕретех курман, çакна есĕ ĕлĕк пĕлмен. Атăл та куна халиччен курман!

---

## Йурă

*Ухсай Йаккăвĕ*

Чи йуратнă, чи илемлĕ
Селĕм йуррăм пур ман,
Сунтăхран ăна илĕм-и,
Кĕвĕлем-и, тусăм?

Çав йурра усранă ĕлĕк
Кукăр хăвăл йăвăç,
Саманийĕ çăвăн-хĕлĕн
Пулнă питĕ йăвăр.

Асатте кĕрĕк саплана,
Пăхнă тĕнĕ витĕр,
Тарăхса çапла каланă,
Пур чунсем те илтчĕр:

«Хăвăлтан йурра хăтарăр,
Сатăмри пур кайăк,—
Нимĕнрен те хăрамасăр
Вăрмана час кайăр».

Кайăксем йурра тупмасăр
Каçсерен сĕрленĕ,
Асатте ним йурламасăр
Ĕмĕрне ирттернĕ.

Ĕмĕр-ĕмĕр тăнă халăх
Çав йурра кĕтсе çеç,
Йывăçа касса сахал-и
Тăрăшнă аттеçĕм?

Тăвăллă хĕрӳ Октăбĕр
Çĕршывра кĕрлерĕ,
Паттăр Хĕрлĕ Çарăн чапĕ
Тĕнчипе çӳрерĕ.

Çавăн чух сăран йĕнерĕ
Ут çинчен каймарĕ,
Кĕрешсе атте çӳрерĕ,
Куç хупса канмарĕ.

Хăрăк йăвăçа, касса вăл,
Тĕпĕнчен ӳкерчĕ,
Хăвăла йар çурчĕ савăл,
Йурă ирĕкленчĕ.

Çав йурра атте çӳретрĕ
Пушкăрт уйĕ тăрăх,
Ескадрон ăна йурларĕ,
Лайăх илтсе тăрăр.

Пелепей панче аттеçĕм
Ӳкрĕ, тамĕ урăх,
Шăммисем çинче, хирте мĕн
Халĕ ӳсне тырă.

Вăл хăварнă йурă-манăн
Чи илемлĕ йуррăм,
Сунтăхран ăна кăлартăм,
Кĕвĕлетĕп, тусăм!

Çырлана кайан хĕрсемĕр,
Иртĕр вĕтлĕх витĕр,
Йурăсем йурланăçемĕн
Иртнипе асилĕр.

## Ĕмĕт

*Н. Илпек*

Илемлĕçке кĕсле сасси,
Йанратçке уçă саслă йурă.
Еп те кĕслеçĕ пуласси
Инçех йулмарĕ, акă курăр. !

Каçпа, хĕвел анас чухне,
Сат хĕрринче ларап та епĕ,
Пусап кĕсленĕн хĕлĕхне—
Йанравлă сассине илтетĕп.

Кĕсле сасси инçе-инçе
Кайат тĕтрелĕ сывлăш витĕр,
Çав сасăри хумсем çинче
Илтсеттĕм çамрăклăх кĕвви те:

... «Сума-сăвап сана, йĕкĕт,
Сума-сăвап сана, çĕршывăм;
Кăмăл тулли вăйхал, ĕмĕт...
Сирте вĕт, хĕрипраç йе ывăл.

Сирте—хаваслăх, çамрăксем,
Сирте—кунçул, сирте—малаллăх»...
Çапла йантраççĕ хĕлĕхсем,
Çаплах кĕслеçĕмĕн хавалĕ.

Ун уçă сассине илтсен,
Лăпкă тапма пĕлмест чĕреçĕм;
Ĕмĕт пĕрре: пĕлӳ çитсен,
Пулатăпах чăн-чăн кĕслеçĕ.

# ЧУХĂН МĔТРИ*

*(Йумах)*

● ●

## „Чухăн Мĕтри“ çинчен

„Сăмах ăсталăхĕн пуçламăшĕ—фольклорта. Хăвăрăн фольклора пухса, çавăн тăрăх вĕренĕр, çавна лайăхрах ĕçлĕр. Вăл сире те, пире те, Сойузри поэтсемпе прозăпа çыракансене те темĕн чухлĕ материал пама пултарать. Иртни çинчен мĕн чухлĕ лайăхрах пĕлĕпĕр, çавăн чухлĕ çăмăлрах, çавăн чухлĕ тарăнрах тата хавасрах хамăр халь мĕн тунисене, вĕсем йепле пысăк вырăнта тăнисене ăнласа илĕпĕр“.

М. ГОРЙКИ (Совет писатĕлĕсен сйесĕ, стенографиллĕ отчот, 676 стр.).

Халăх хушшинче калакан тĕрлĕ йумахсенче тĕнчере пулман фантазилĕ йапаласем çинчен каланисем те пит нумай. Анчах çапах та йумахсенче халăх пултарулăхĕ (творчĕстви) палăрать. Кĕлекхи йумахсенчи хăш-пĕр шухăшсем хальхи техникăра ĕнтĕ пурнăçа кĕнисем те нумай; сăмахран, вутсăр-кăвайтсĕр ел ктричĕствă вăйĕпе апат пĕçерекен каструлсем, лашасăр çӳрекен çилçунасем (айеросани), сывлăшра вĕçсе çӳремели хатĕрсем, пĕтĕм тĕнчене хыпар саракан радио аппарачĕсем, т. ыт. те.

Çак „Чухăн Мĕтри“ çинчен калакан йумахра та хальхи саманара пурнăçа кĕнĕ хăш-пĕр фантазилĕ шухăшсенчен пуçне, çынсен кла лă уйрăмлăхĕсем, пурнăç хастарлăхĕсем, ăстăнĕсен хавалĕсем палăрса тăраççĕ. Акă ку йумахра чухăн хресченсемпе йалти експлоататтăр ем хушшинчи çивĕччĕн пыракан клас кĕрешĕвĕ те лайăх курăнса тăрать. Пуп таврашĕсем çăткăнлăхĕпе, улпут ачи çăмăллăнах укçа илсе, нимĕн ĕçлемесĕрех йамăт мул пухса пуйас кăмăлпа таçта кайса кĕме те хатĕр. Анчах ĕççынни начар пурăнни хăйĕн найанлăхĕпе мар, ăстăнĕ имшерккипе те мар, експлоататтăрсен пусмăрĕнче асапланса пурăннинчен килнĕ. Чухăн Мĕтрин вичкĕн шухăшĕ, изобретатĕлствиллĕ харампырсенчен, тĕн тарçисенчен кĕретех малта тăрать; вăл хăйĕн клас тăшманĕсене кулăшла та, выртса йăвалан а йĕмеллех те туса, пыра киле, кайаратпа вĕсене пачах пĕтмеле те туса хурать.

Мĕтри кăтартнă тĕрлĕ инкексемшĕн пуп, тийаккăн, тийечук Мĕтрийе чăпта ăшне çыхса шыва йама шутлаççĕ. Анчах вĕсен хăравçăлăхне, тăмсайлăхне пула ĕç тепĕр майлă çавăрăнса ларать. Мĕтри вырăнне улпут ачи пĕтмеле, Мĕтри çăлăнса тухмала, кайран хăйсем путмала пулса тăрать.

Чăнах та клас кĕрешĕвĕнче капиталисла çăткăн елементсем тĕп пулса пĕтсе ларасси, пролетариатпа ĕçхалăхĕ хăйĕн вăйлă аллипе, хăйĕн вичкĕн тăн-пуçĕпе, коллективлă хастарлăхĕпе çĕнтерсе мала тухса класлăр обшчĕствă туса хурасси паллах. Çак малала каласа панă йумахăн класлă пĕлтерĕшĕ, пирĕн шухăшпа, çавăн пек пулмала.

М. Д.

Ĕлĕк авал пĕр йалта
Мĕтри йатлă чухăн çын
Асапланса пурăннă.
Нушасенчен хăтăлма,
Çăтмах пурнăçлă пулма
Шырать Мĕтри тĕрлĕ май.
Пĕрре раштав çитсессĕн
Пачăшкăпа тийаккăн,
Хĕсĕк хӳри тийечук
Пычĕç йала хĕреспе
Раштав йурри йурласа
Килрен киле йĕрлеме.

### Пиçхуран

Çав вăхăтра Мĕтри те
Шутла-шутла ăс тупрĕ:
Алкумĕнче кирпĕчрен
Хуран лартмали турĕ.
Хăй пӳртĕнче пĕр хуран
Çакса йачĕ вир пăтти.
Пупсем çитес сехете
Лакăртатса вĕретет.

Чăрик-чарик çил хапхи
Йар уçăлса кайсанах,
Хăппăл-хаппăл хурана
Мĕтри йатса тухать те,
Лартать хатĕр вырăна.
Пачăшкисем кĕнĕ чух
Алкумĕнче вир пăтти
Сиксе вĕрет хурантa.
Мыскарана курсанах,
«Леш хайхисем» чарăнса,
Кĕл йуррине пăрахса,
Хытса кайрĕç тĕленсе:

«Ак тамаша, мĕнле-ха
Вутсăр-мĕнсĕр хăй тĕллĕн
Лакăртатать вир пăтти?
Чухăн Мĕтри пурĕ-пĕр
Çак меслете сутмасăр
Усрайрас çук йаланах.
Ирĕксĕрех ултавпа
Хамăр илер хурана».
Мĕтри пӳрте кĕрсессĕн,
Кĕлли-йурри пулмарĕ.
Пуп тийаккăн, тийечук
Виççĕн харăс тапратрĕç,
«Çав хурана сут», тесе.
— Çук,—тет, Мĕтри,—сутмастăп,
Пурнăç начар, лашам çук.
Вут турттарма халăм çук.
Вутсăр вĕрет, хăй тĕллĕн;
Хамах кирлĕ ку хуран.
Ăна сире сутсассăн,
Йăлтах пĕтсе ларатăп».
Анчах çапах пупĕсем
Çирĕмпилĕк тенкĕшер
Укçа хучĕç кăларса,
Йатса кайрĕç хурана.

Çав хурана сăнама,
Чи аслинчен пуçлама,
Пупĕ илсе пычĕ те,
Тĕрлĕ йур-вар тултарса,
Тутлă апат пĕçерме,
Алăк умне лартрĕ те
Кĕрсе выртрĕ çывăрма.
Тарать, пăхать хурана.
Апат пиçес вырăнне
Шăнса ларнă тап-тапсах.
Тийаккăнĕ çитиччен
Пупĕ хушрĕ стрепкипе
Тасатмашкăн хуранне.

Тул çутăлнă-çутăлман,
Пупĕ патне тийаккăн
Персе çитрĕ хашкаса.
— Ну, мĕнле-ха хурантa
Апат лайăх пиçрĕ-и?—
Ыйтать пупран васкаса.

— Хам вăраннă вăхăта
Лакăргатса вĕресе
Ларать хуран чашкăрса,
Тутлă апат пĕçерсе,—
Терĕ пупĕ куç хĕссе.
— Халĕ ĕнтĕ ман черет
Кунпа усă курмашкăн,
Тутлă апат çимешкĕн,—
Сăмах хушрĕ тийаккăн.
Тытрĕ алла хурана,
Килне çитрĕ хашкаса.

Апат-çимĕç тултарса
Сив алкумне кăларса
Лартма хушрĕ тарçине.
Виç-тăватă сехетрен
Тухса пăхрĕç хурана:
Шывĕ, ашĕ, йур-варĕ
Хытса ларнă пăрланса.
Тийечукĕ пыриччен
Шăн апата ăшăтса,
Тасатаççĕ хурана.

Кĕнĕ-кĕмен тийечук
Тĕпчет хуран меслетне.
— Калама çук пит аван
Йашка пиçрĕ хурантa.
Ун пек апат нихăçан
Çисе курман, тупата.
— Апла пулсан епĕ те
Илсе кайам пĕçерме.
Килне илсе пырсассăн,
Çимĕç йарса тултарса
Лартрĕ тула, сив çĕре.
Йашки шĕврех пулнипе,
Ытла хытă шăннипе
Кайнă хуран çурăлса
Шăп варринчен, çурмаран.
Тур шăхличĕ-тийечук,
Саншăн пулсан телей çук!

Çурăк хурана йатса
Пырать тийаккăн патне:
— Санăн мĕнле вĕрерĕ?
Ман çурăлчĕ шартлатса.

---

*) Çак йумаха Аслă-Патăрйел районĕнчи Хирти Сĕнтĕр йалĕ çынни, 28 çулхи колхозник В. К. ЧЕНАКИН 1935 ç. апрел уйăхĕнче колхоз правленийĕнче каласа панă. Унчух итлекенĕсем—4 коньух, 2 хуралçă, 3 комсомолĕц-колхозник, ытти колхозниксем 4, мĕн пурĕ 13 çын пулнă. ЧЕНАКИН каласа панă тăрăх, И. Г. БЫКĂВ çырса йанисене пусаса, йумах стилне усраса, М. Д. ДАНИЛĂВ сăвăласа умсăмахĕ çырса хатĕрлесе панă. (Ред.)

— Ҫук, манӑн та пурпӗрех
Шӑнса ларнӑччӗ хытса.
Атӑр кайар пуп патне,
Хуран пирки канашлар,
Камӑн мӗнле пиҫнине.
Тийечукпа тийаккӑн
Ҫурӑк хурана йӑтса
Пупӗ патне кӗрсенех:
— Шӑнса ларчӗ хай хуран,
Санӑн мӗнле пиҫнӗччӗ?
— Ҫавах пулчӗ манӑн та.
— Ну,—терӗҫ пӗр харӑс:
— Лартрӗ Мӗтри хуранпа.
Атӑр ӑна вӗлерер.

## Кӗмӗл тӑкан кӗсре

Ҫак виҫӗ кун хушшинче
Мӗтри тупрӗ тепӗр ӑс.
Аллӑ тенкӗ укҫипе
Илсе йачӗ пӗр кӗсре.
Пупсем ҫитес сехете
Кӗсре кутне вун кӗмӗл
Чиксе хурат вуншар пус.
Пӳртне кӗртет кӗсрене,
Кайри урисен айне
Сӑхман сарат урайне.
Пуп команди кӗнӗ чух
Мӗтри ларнӑ кукленсе,
Кӗсре хыҫне пӗшкӗнсе.
Пупсем кӗнӗ-кӗменех,
Мӗтри вӑрттӑн кӗсрене
Кӑнт! чышрӗ айккинчен.
Кӗсри шартах сикнипе
Чӑнкӑрр! ӳкрӗҫ кӗмӗлсем.
Ҫакна курсан пупӗсем
Хытса кайрӗҫ тӗлӗнсе:
— Мӗн ӗҫлетӗн ес Мӗтри?
— Мӗн ӗҫлесси-тӑвасси,
Пурнӑҫ ҫити-ҫитменни,
Ҫак кӗсрене туйантӑм.
Кӗмӗл кӑларттарап-ха.
Анчах пайан, темӗншӗн,
Вуншар пуслӑх ҫеҫ тухат,
Ӗнер вара шав кӗмӗл
Алшар пуслӑх тухнӑччӗ.
— Ну, Мӗтри, ес пире
Хытӑ лартрӑн хуранпа.
Сут-ха ӗнтӗ кӗсрӳне,
Усси пулми иҫмасса.
— Йури илтӗм кӗсрене,
Есӗр каллех пӗтерсе
Хӑваратӑр нимӗнсӗр.
Пачӑшкасем виҫҫӗш те:
— Сут, сут!—тесе тимлеҫҫӗ.
Алшар тенкӗ сӗнеҫҫӗ,
Укҫа хурса параҫҫӗ.

Мӗтри панчен кӗсрене
Ҫавӑтса та кайаҫҫӗ.
Черет тӑрӑх пачӑшка
Пӳртне кӗртрӗ кӗсрене.
Кайри урисен айне
Сӗтел ҫитти сарчӗҫ те,
Пачӑшкипе матӑшки
Чӗркуҫланса ларчӗҫ те,
Кӗсре хӳри хыҫӗнче
Кӗтеҫ кӗмӗл ӳкессе.
Мӗтри лаши халиччен
Аван апат курмансӑр,
Вар-хырӑмӗ хирӗҫсе
Шав-в-в! йухтарса кӑларчӗ,
Кӗмӗл хуралҫисене
Лапӑртаса пӗтерчӗ.
Пачӑшкипе матӑшки
Тумтирсене хыврӗҫ те,
Чиксе хучӗҫ сакайне.

Ҫуса тасатнӑ ҫӗре
Ҫитсе кӗрет тийаккӑн:
— Ну, мӗнле-ха, аван-и?
Кӗсре кӗмӗл парат-и?
— Пайан питӗ чаплах мар,
Ҫирӗмшер пусран ытлах мар.
— Ну,—терӗ тийаккӑн,—
Кӗмӗл пухма ман черет.
Илсе кайат кӗсрене,
Парат хывӑх пӑтратса.
Ӗҫӗ пулчӗ ҫав-ҫавах.

Тийечукӗ пыриччен
Варланчӑка тасатса,
Тӑрат «ҫур-пуп» ҫӑвӑнса.
Пырса кӗчӗ тийечук:
— Ну, ӗҫсем аван-и?
Кӗсре кӗмӗл тӑкат-и?
— Шӗкӗр турра—пӳлӗхҫе,
Шав аллӑшар пуслӑхи
Кӗмӗл укҫа кӑларчӗ.
— Халех илсе кайам-ха,
Телей кӗтсе пӑхам-ха.
Илсе кайрӗ кӗсрене,
Пачӗ ӑна чӗр ыраш...
Пӗтӗм пӳртне варларӗ,
Кӗмӗл тавраш тухмарӗ.
— Мӗнле капла кулӑшла?
Мӗтри кӗсри ултавлӑ!
Ҫак сӑмахпа тийечук
Кӗчӗ тийаккӑн патне:
— Пирӗн капла пулчӗ-ха,
Атӑр кайар пуп патне,
Пӗлер унӑн мехелне.
— Ну, пачӑшка, сан мӗнле?
Пирӗн кӗсре ӑнмарӗ,
Пӗтӗм пӳрте варларӗ,
Кӗмӗл тавраш тухмарӗ.
— Утиалсем, тумтирсем
Хаҕ те вырттаҫ варланса.
— Каллех лартрӗ, вӗт, Мӗтри.
Каҫарас мар ултавҫа.

## Чуп-ҫуна

Хыпаланса виҫҫӗш те
Утрӗҫ Мӗтри патнеле.
Мӗтри пӗлет вӗсене,
Виҫӗ куштан килессе.
Хыҫлӑ пӗчӗк ҫунана
Пупсем пырас ҫул ҫине
Тӑвала туртса ухат те,
Туртисене тӑратса
Ҫыхса хурат ҫӳлеле.
Пупсем ҫитнине курса,
Ҫуни ҫине ларчӗ те
Тӗрлеттерчӗ айлӑма.
Пупсем ҫавна курсанах
Хытса кайрӗҫ тӗлӗнсе.
Хӑйсен тӗлне ҫитсенех:
— Тӑр-ха!—тесе чараҫҫӗ.
Тормӑсласа ҫунине
Чарса хучӗ пуп умне.
— Мӗнле капла лашасӑр
Ҫӳретӗн ес ҫунапа?
— Ҫук пурӑнаҫ тенӗскер
Туйантарӗ темӗн те.
Лашам сире кайсассӑн
Лашасӑрах чупакан
Ҫак ҫунана туйантӑм.
Пачӑшкасем вӑрттӑнрах:
— Атӑр илер ҫунине,
Пулми курса уссине.
Кӗсрӳпеле лартнӑшӑн
Сут-ха пире ҫупуна.
— Ай-йай есӗр мӗнле-ха,
Каллех-и ман пурнӑҫа
Туртас тетӗр кайала.
Хама кирлӗ, сутмастӑп.
Ирӗксӗрех ҫӗраллӑ
Тенкӗ хучӗҫ кӑларса.
Илсе кайрӗҫ ҫунана,
Пуп патӗнче сӑнама.

— Хӑнасене кайиччен
Тӗлӗнтерсе ҫынсене
Ҫавӑрнар-ха йал тавра.
Туртисене тӑратса,
Ҫыхса хучӗҫ ҫӳлеле.
Улӑм хучӗҫ кут айне.
Ларчӗҫ виҫҫӗн вырнаҫса,
Пуп тарҫине хӑвӑртрах
Хушрӗ уҫма хапхине.
Хапха уҫнӑ-уҫманах,
Виҫҫӗн харӑс ӑмӑртса
Но-но!—тесе кӑшкӑрчӗҫ.
Пушӑпа та ҫапаҫҫӗ,
Лӑканса та пӑхаҫҫӗ,
Ҫӗре анса тӗртеҫҫӗ...
Чупмаст ҫуна хӑй тӗллӗн.
Виҫҫӗшӗ те чарӑнса
Ӳкрӗҫ тарӑн шухӑша.

## Чалак арӑм

— Мӗтри каллех лартрӗ вӗт.
Атӑр ӑна хаҕхинче
Тинех кайса вӗлерер.
Виҫҫӗшӗ те ҫиленсе
Утрӗҫ Мӗтри патнеле.

Вӗсем пырасса кӗтсе,
Илет Мӗтри пӗр вӑкӑр,
Аллӑ тенкӗ тӳллесе.
Ҫав вӑкӑра пусат те,
Хӑмпи ӑшне чӗрӗ йун
Ҫыхса хурат тултарса.
Ҫапла калат арӑмне:
— Пачӑшкӑсем килсенех,
Хӑмпа пытар хул айне.
Епӗ сана ӗҫ хушсан,
Итлемесӗр кутӑнлан.
Епӗ сана ҫилӗпе
Хулайӗнчи хӑмпӑран
Чышӑп йарӑп ҫӗҫӗпе.
Мӑкӑлт йӑванса кайсан,
Ҫинчен хӗртӗп пушӑпа,
Есӗ сиксе тӑрӑн та:
— Мӗтри, ӗҫ хуш, мӗн тӑвас?
Чупкаласа ҫех ҫӳре.
Ҫапла хушрӗ мӑшрине.

Çав вăхăтра пупĕсем
Какăлтатса кĕреççĕ.
— Ну, Мĕтри, лартнăшăн
Сана вĕлерме килтĕмĕр.
— Вĕлерсен те, вĕлерĕр,
Анчах тăхтăр пĕр сехет:
Йулашкинчен сирĕнпе
Хăпаланам виличчен.
Ну, карчăк, хăвăрт пул,
Сĕтел çине апат хур.
— Йалан мана ĕç хушан.
Кирлех пулсан—хатĕрле.
— Е-е, есĕ çапла-и?
Кутăнланас тетĕн-и?!
Сĕтел çинчи çĕççипе
Хул айĕнчен арăмне
Йашт! тутарчĕ çилĕпе.
Шапăр! анчĕ чĕп-чĕр йун.
Йăванчĕ карĕ арăмĕ.
Пăта çинчи пуштшине
Мĕтри алла илчĕ те,
Хытă хĕртрĕ арăмне.
Арăм сиксе тăчĕ те:
— Мĕтри,—терĕ,—мĕн ĕçлес?
Чупкаласа çеç çӳрет.
Хирĕçмесĕр, вăрçмасăр,
Хатĕрлерĕ апатне.

Леш хайхисем тĕлĕнсе
Калаçаççĕ Мĕтрипе:
— Мĕнле пулчĕ ку капла?
Арăм виличĕ, чĕрĕлчĕ!
Çӳрет вăр-вар, çămăллăн?
— Кутăнланат хăш чухне.
Анчах çапла тусассăн
Чалакланат кĕретех.
Çак сăмаха хушсассăн
Мĕтри тухрĕ тулала.
Пуп, тийаккăн, тийечук
Капашлаççĕ шăппăнрах.
— Ку меслет, тен, пире те
Усă пама пултарат.
Илсе кайар çĕççине
Арăмсене тӳрлетме.
Мĕтри тултан кĕрсенех:
— Çĕççӳпеле пуштуна
Пире парса йар,—теççĕ.
— Ухмах тетĕр пулĕ мана
Ку йапалана сутма.
Унсăр арăм пуç тăрпех
Ухса ларĕ тата ман.
Анчах çапах хистесе,
Кашни çирĕмпилĕкшер,
Укçа кăларса параççĕ,
Пуштăпа çĕççе илеççĕ,
Килĕсене кайаççĕ.

Матăшкине вĕрентме
Пупĕ сăнав пуçларĕ;
Пӳртне кĕрсен арăмне:
— Чуп-ха просфирнă патне.
Просвир килĕ, хăвăртрах.
— Ей-й-й, вара мĕн пуша
Лăкăштатса çӳреме.
Айăк,—терĕ матăшки.
— Кутăнланма пăхатни?
Акă сана, вĕрентĕм!—
Хул айĕнчен çĕçĕпе
Йак! тутарчĕ арăмне.
Пупĕ тухрĕ шăвласа,
Персе анчĕ шанлатса.

Йупĕ пушă тытрĕ те,
Ăшалама тытăнчĕ.
Хĕнерĕ те хĕнерĕ,
Арăм хытса кайиччен.
Тĕп сакайне уçрĕ те
Тĕртсе йачĕ антарса.

Çав вăхăтрах тийаккăн
Пырса кĕчĕ пуп патне:
— Чалакланчĕ-и матку?
— Ех, ку меслет пит аван.
Нихăçан та хушнине
Итлеместчĕ матăшка.
Çапла туса пăхрăм та,
Тухса вĕçрĕ, ĕçпеле.

— Пар-ха, еп те арăма
Çивĕч пулма вĕрентем.
Çĕçĕпе пушша илчĕ те,
Килне çигнĕ-çитменех:
— Ну, арăм, чуп часрах,
Старăстаран çуртасем
Халех кайса илсе кил!
— Айук,—терĕ,—каймастăп,
Ку хĕрарăм ĕçĕ мар!..
Тийаккăн та, пуп пекех,
Йашт! тутарчĕ арăмне,
Илчĕ хыттăн хĕнесе.
Ку арăм та çавăнтах
Кĕрсе ӳкрĕ сакайне.

Пырса кĕчĕ тийечук:
— Сăнав ăнăçлă пулчĕ-и?
Арăм хавшак ĕçлет-и?
— Нихçан кун пек васкаса,
Хушсан тухса каймастчĕ.
Пайан хам та сисмерĕм,
Чупрĕ старăста патне.
— Ну, апла пулсассăн
Еп те пăхап сăнаса,
Хам арăма вĕрентсе.

Чупса çитрĕ хăй килне.
— Чуп-ха, арăм, лавкана,
Илсе кил-ха çуттине!
— Кĕрланкушăн кастарса
Çӳрем-стĕп сӳслеисе.
Кирлĕ пулсан хăвах кай!..
Тийечукĕ çĕççипе
Йак! тутарчĕ арăмне.
Пушă йарса тытрĕ те,
Çанат, хĕнет тилĕрсе,
Йун кĕлерсе выртиччен,
Шăках хытса кайиччен.
Сисрĕ йăнăш тунине,
Чупрĕ тийаккăн патне:
— Вилсе выртрĕ ман арăм,
Ахăр мелне пĕлмерĕм.
Анчах харăс иккĕш те
Йĕрсе йачĕç кăшкăрса,
Арăмсене хĕрхенсе.
Пупăн мĕнле пулнине
Кайрĕç пĕлме ун патне.
Вĕсем пынă вăхăтра
Йăваланса макăрат
Пупĕ арăм пĕтнипе.

## Чăпта ăшĕнчи Мĕтри

Пачĕç пупа каласа
Тийаккăнпа тийечук
Хăйсен мĕнле пулнине.
Виççĕшĕ те пĕр кавар:
— Атăр ĕнтĕ Мĕтрийе
Тинех кайса вĕлерер!
Йăлт хупларĕ вăл пире
Чейе, ултав сăмахпе.
— Ну, Мĕтри, ес пире
Çак инкеке кăтартрăн.
Куншăн сана пурĕпĕр
Вĕлеретпĕр çакăнтах.
— Ирĕк сирĕн, вĕлерĕр.
Пачăшкасем Мĕтрийе
Чăпта ăшне чикрĕç те,
Йалтан илсе тухаççĕ.
Ик çухрăмра аслă шыв,
Çак шыв урлă мăн кĕпер.
Кĕпер çине çитрĕç те,
Шыва йама шутлаççĕ.
Анчах чейе Мĕтрине
Шыва тĕртсе йамашкăн
Виççĕшĕ те хăймаççĕ,
Сĕтĕресрен хăраççĕ.
— Капла пирĕн ĕç тухмасть.
Атăр, йала кайар та,
Пакур илсе килер те
Тĕртсе йарар айакран.

Вĕсем куçран çухалсан,
Чăпта ăшĕнче Мĕтри
Выртать шухăша кайса.
Кĕпер çине тройккăпа
Улпут ачи шăнкравпа,
Пырса кĕрет сиктерсе,
Курах кайать чăптана.
Сас илтĕнет ăшĕнчен:
— Вунă тенкĕ укçашăн
Мĕн нуштаран тертленсе
Выртас чăпта ăшĕнче?
Çак сăмаха илтсенех:
— Мĕскер пуплен, кам-ха ес?—
Тесе ыйтрĕ улпучĕ.
Çук, еп хамăн нушапа
Ларап чăпта ăшĕнче.
Кашни сехет ларнăшăн
Вуншар тенкĕ параççĕ.
Улпут ачи шутласа:
«Иксĕр хĕрĕх тенкине
Илме пулать çăмăлах.
Мана унта ларнине
Никамах та пĕлес çук».
— Лартсам мана пĕр куна!—
Тесе салтать чăптана.
Мĕтри сиксе тухсанах,
Улпут ачи хăй кĕрсен,
Мĕтри сыхрĕ лайăхрах
Кĕпер çинчи чăптана:
— Есĕ нимĕн чĕнмесĕр
Шăпах ларăн çакăнта.
Каларĕ те, хăвăртрах
Улпут трантасĕ çине
Мĕтри ларчĕ вырнаçса,
Тройккăпала йалала
Пырать çулпа тустарса.

Пуп, тийаккăн, тийечук
Виçĕ пакур йатнă та,
Тăкăштатса утаççĕ,
Чăпта патне васкаççĕ.
Мĕтри хăйне палласран,
Тилхепине кашт! туртрĕ,
Улпут тройкки вăшт! турĕ.

Ф. ЛАВРЕНТЙĬ В худ. картинĕ.



Кадăрсем хатĕрленеççĕ

Пачăшкасем тарласа,
Кĕпер çине çитсессĕн,
Пакурсемпе çаклатса
Тĕртсе йачĕç чăптана.
Улпут ачи шанлатса
Пакăртатрĕ шыв тĕпне.
Шур кăпăклă хăмпăсем
Сÿнчĕç çутă шыв çинче.
Пачăшкисем:—Ха-ха-ха!
Мĕтри пĕтнине пăх-ха.
Пĕтин пĕттĕр шăпăрлан,

Унăн хитре арăмĕ
Пире йултăр иçмасса.
Кам чи малтан ăмăртса
Чупса çитĕ ун килне,
Мĕтрин чипер арăмне
Илсе кайать хăй патне.

Виççĕшĕ те пĕр харăс
Ăмăртмала чупаççĕ.
Пуп, тийаккăн, тиăечук
Мĕтри килне çитеççĕ.

Капах тăчĕç чаранса:
Чÿречине уçнă та
Мĕтри ларать чей ĕçсе,
Йĕп-йĕпе тарласа.
— Шыва тĕртсе йанăскер
Хăш вăхăтра ĕлкĕртĕн,
Киле çитсе лармашкăн?
Ăçтан тупрăн лашасем?
— Есĕр шыва йарсассăн,
Телей пулчĕ ман тĕллĕн:
Çивкă, буркă, урхамах
Темĕн чухлех авăрта.
Анчах чăпта ăшĕнчен
Часах тухайманнипе,
Лайăхрахне суйлама
Май килмерĕ ĕлкĕрме.
— Сан сăмахна шанма çук!
— Тухса курăр картишне,
Лашисем те йĕп-йĕпех,
Хам та ÿкнĕ чăм шыва.

Пачăшкасем васкаса,
Кĕпер çине виççĕш те
Ăмăртмала чупаççĕ,
Лаша тупма хĕрĕнсе.
— Ну, тăвансем, аттесем,
Алла лаша лексессĕн,
Ули-хăли—ан тиркĕр,
Тытса тухăр авăртан.
Чăмпăрт-чăмпăрт шыв тĕпне
Анса кайрĕç виç тăмсай.
Пирĕн Мĕтри пайан кун
Ырă курать колхозра.



М. СПИРИДОНĂВ худ. картинĕ.

Вулав çуртĕнче

# Бруно Йаҫенскипе Леонид Леонӑв тата Анна Березин писателсем Шупашкарта

Чӑваш автономийӗ 15 ҫул тултарнӑ йатпа пухӑннӑ уйава совет писателӗсем—Леонид Леонӑвпа Бруно Йаҫенски тата Анна Березин йулташсем килчӗҫ. Ийулӗн 7-мӗшӗнче вӗсем Чӑваш совет писателӗсемпе калаҫу туса ирторчӗҫ. Чӑваш совет писателӗсен Сойузӗн предҫедателӗ А. И. Золотӑв, хӑнасене саламласа, чӑваш литературипе кӗскен паллаштарнӑ хыҫҫӑн М. Трубина, Ӗҫхӗл, Петтоки, Агакӑв, тата ыттисем те хӑнасене хӑйсем йепле ӗҫленине, автономи уйавне йепле ӳсӗмсемпе кӗтсе илнине каласа пачӗҫ. Леонид Леонӑв Чӑваш совет писателӗсен ыйтӑвӗсене хирӗҫ ҫапла тавӑрса каларӗ:

— Епӗр Мускаври савӑтсенчи литкружоксене кайсан та, ытти хуласене кайсан та, пире ӗнтӗ йаланах хамӑр йепле ӗҫлени ҫинчен каласа пама ыйтаҫҫӗ. Вӑл, паллах, кирлӗ ыйту. Писателӗн ӗҫӗ пур ӗҫ пекех хисеплӗ, мухтавлӑ ӗҫ. Анчах унта нимӗнле ҫекрет та ҫук. Хирург сывӑ мар ҫынна операци тӑвас пулсан хӑйӗн ӗҫхатӗрӗсемпе унӑн хырӑмне касат̆, унтан етемӗн ӑшӗнчи оргӑнӗсене йӗркелӗ ӗҫлеме чаракан йапалана касса кӑларат̆. Вара татах хырӑма ҫӗлесе лартат̆. Операци тунӑ ҫын сывалат̆, хырӑмне каснинчен нимӗнле йӗр те йулмаст̆. Мӗн пулӑшат̆ хирурга ҫынна сыватма? Паллах, хӑйӗн ӗҫне лайӑх вӗренни, нумай ҫулхи практикӑлӑ ӗҫ. Писателӗн ӗҫӗ те ҫавнашкалах. Пӗр-пӗр класӑн йе уйрӑм ҫынсен пурнӑҫне ҫырса кӑтартас пулсан, писателӗн пурнӑҫа аван пӗлни, пурнӑҫри практикӑ кирлӗ. Вӗт пире Сталин йулташ «етем чунӗсен инженерӗсем» терӗ. Вӑл темле чаплӑ ордӗн мар. Пирӗн ҫав хисеплӗ йата илтес пулсан, тивӗҫлӗ, ӗҫхалӑхне кирлӗ ӗҫ тумала. Пирӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлемеле. Сталин йулташ ҫапла калани епӗр пурте «етем чунӗн инженерӗсем» пулса ҫитнине пӗлтермест, вӑл пире инженерсем пулма чӗнни пулат̆.

Малала Леонӑв йулташ пирӗн Совет Сойузӗнчи писател йепле чаплӑ вырӑнта хисепленсе тӑни ҫинчен калат̆. «Писател тени,—тет вӑл,—калама ҫук мухтавлӑ, чаплӑ йат. Авалхи Римре поет тенийех пророк тенине те пӗлтернӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн писател йатне илтес пулсан калама та ҫук нумай вӗренсе пысӑк ӗҫсем тумала. Писателӗн пайанхи куна ҫеҫ мар, иртнипе пулассине те тӗплӗн пӗлмеле. Авалхи пурнӑҫа пӗлмесӗр хађхи пурнӑҫа та ӗненмеле сӑнласа пама ҫук. Пирӗн ҫав чаплӑ йата илтме условисем пур. Пире ӗҫхалӑхӗ хисеплет, тӑвапла йуратат̆. Пирӗн писателсенчен нумайӗшӗн произведенийӗсем икшер мӗлйун екземпђар пичетленсе тухнӑ. Ҫавнашкал йышлӑ тираж ҫинчен капиталисӑм патшалӑхӗнчи писателсем тӗлленме те пултараймаҫҫӗ.

Писател йаланах пысӑк ҫын пулнӑ. Вӑл куђтурӑ тӗлӗшӗнчен хӑй ӗмӗрӗнчи чи малта пыракан ҫынсен ӗретӗнче пулнӑ. Писателӗн ӗҫӗнче социалисӑмла ӗҫӗн пуҫламӑшӗ пур. Вӗт кашни писателӗн ӗҫех общӗствӑшӑн. Ҫавӑнпа та вӑл хӑй йатне темиҫе ӗмӗрлӗхе хӑварат̆. Тӗслӗх, Пушкина илер. Унӑн произведенийӗсене хӑй вилни кӗҫех ҫӗр ҫул ҫитет пулсан та, йуратсах вулатпӑр. Унӑн йатне никам та хисеплемесӗр асӑнаймаст̆.

Епӗр пурӑнакан ӗмӗр уйрӑмӑнах телейлӗ, ҫутӑ, савӑнӑҫлӑ ӗмӗр. Пайан есӗр хӑвӑрӑн автономи 15 ҫул тултарнине уйавлатӑр. Сирӗн республикӑ 15 ҫул тултарнишӗн чӑвашсем ҫеҫ мар, пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ савӑнат̆. Епер ЦИК ҫеҫҫинче епӗ Водопйанӑвпа парашутискӑ Йакӑвлӗвӑ тухса каланине итлерӗм. Вӗсем иккӗшӗ те чӑвашсем мар пулин те, савӑнса хумханаҫҫӗ. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен пирӗн Сойузри пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ халиччен никам курман ӳсӗмсем тӑват̆. Ҫав ӳсӗмсем пурне те савӑнтараҫҫӗ, епӗр вӗсемпе мухтанма та тивӗҫлӗ.

Пирӗн халӑхӑн шухӑшӗ те пӗтӗмпех урӑхла. Пӗрре епӗ урамра ҫын йатлаҫнине куртӑм. Вӑл урам варне чул начар сарнӑшӑн вӑрҫат̆. Кама вӑрҫат̆ пулӗ тетӗр? ЦИК-ра ӗҫлекенсене-и? Ҫук. Вӑл хӑйне хӑй вӑрҫат̆. «Епӗ,—тет,—рабочи, ҫак урама чул сартӑм. Вӑл хамӑршӑн, анчах, авӑ чулсем туха-туха ӳкнипе ҫул пӑсӑлнӑ та, хамах асапла-



ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Парти Чӑваш Обкомӗн куђтпроп пуҫлӑхӗ И. Д. Кузнецов. Чӑваш Тӗпӗҫтӑаком предҫедателӗ А. Н. Никитин, Хаймс й-ш., Анна Березинпа Бруно Йаҫенски писателсем.

Уйрӑмах, ҫамрӑксемпе ӗҫлес ыйту пирӗн умра питех те ҫивӗччӗн тӑрать.

Ҫамрӑксем хушшинче ӗҫлесси халь анчах йӗркеленсе пыра пуҫларӗ: Йулашки ҫулсенче ҫамрӑк ҫыракансемпе куллен тӑтӑшах тимлӗн ӗҫлесе пыни пулман. Ҫавӑнпа та вӗсен хушшинче тӗрлӗрен чирсем, йӗркесӗрлӗхсем те пулкаларӗҫ (Шупашкарта, Вӑрнарта). Халӗ те хӑшӗсем сывах марри палӑркалать хӑш чухне. Вӑл уйрӑм писатӗлсен пултарулӑхӗ хӑш тапхӑрта мӗнле ӳссе пыни ҫинчен, вӗсен хушшинче мӗнле сулӑнчӑксем, чир-чӗрсем, чӑрмавсем пулни ҫинчен калать.

Писатӗлсене мӗнле пӑхса ӳстертӗмӗр-ха епӗр иртнӗ ҫулсенче? Акӑ, пирӗн Ӗҫхӗл Арк. тӳрех «Трактӑр» альманаха пичетленме пуҫларӗ. Сӑввисем унӑн унчухне ытла та йапӑхчӗ. Ҫапах пичетленӗ вӗсене. Паллах, Ӗҫхӗл ӑна курса сӑвӑсем ҫырас ӗҫ пек ҫӑмӑлли нимӗн те ҫук, тесе шухӑшлама пултарнӑ. Кун пек ҫамрӑксене пӑсни ытла та сийенлӗ пулнӑ ӗнтӗ.

Тата Чӑваш совет писатӗлӗсен Сойузне организацилленӗ хыҫҫӑн хӑшӗсем, халӗ пирӗн тахҫанталпа ҫыракансемпе анчах ӗҫлемеле, тесе шухӑшлатчӗҫ (Шупуҫҫынни т. ыт.). Ҫамрӑксемпе ӗҫлессине манса пыратчӗҫ. Кун пек пӑхни ӗҫе нумай чӑрмантарса тӑчӗ.

Малала «Сунтал» журналӑн ҫамрӑксемпе нумай ӗҫлемеле пулать. Критикӑ ҫук унта. Хаҫатсенче рецензисем памаҫҫӗ. Никам та нимӗн те чӗнмеҫҫӗ. Вара пирӗн литературӑ пурнӑҫӗнчи ӗҫсене, ҫитӗнӳсене, ҫитменлӗхсене вӑхӑтра паллӑ туни, асӑрхаттарни ҫук. Вӑл—пирӗн литератӑрсемшӗн кулленхи вӗренӳ пулса тӑнӑ пулӗччӗ.

Косӑрӗв йулташ хальхи ҫамрӑксене мӗне вӗренмели, мӗне пӗлмели ҫинчен каланине тата Постышӗв йулт. совет писатӗлӗн мӗнле пулмали ҫинчен каланисене аса илтерет докладчик.

— Вӗренӗр, йулташсем, хӑҫӑрна хӑвӑр ытларах ӗҫлӗр, пӗлӳсене хӑпартӑр, ӑсталанӑр, вара епӗр чӑваш литературине Сойузри пур халӑхсене те йуратмала литературӑ тӑвӑпӑр,—тет Д. Данилӑв.

Пренисенче ҫамрӑк ҫыракансем нумайӗшӗ тухса каларӗҫ.

Елӗкрех, кӑтартусем пани мана ҫилентеретчӗ, тет Кӑтра Мишша, халь апла мар, вӑл, нумайрах кӑтартусем пама ыйтать. Хытӑ вӗренме пуҫларӑм, тет.

Тухса калакансенчен пурте вӗренӳ ӗҫне тимлӗн тытӑнни ҫинчен, хӑйсен пӗлӗвӗпе пултарулӑх ӑсталӑхне хӑпартни ҫинчен, хӑйсен культурлӑхне ӳстерни ҫинчен калаҫҫӗ (Планер, Деферан, Ваниш, Павлӑв-Шоор т. ыт. те).

Думилин Илле ҫамрӑк писатӗлсен пурнӑҫа тарӑнрах ӑнланма, курма пӗлмели ҫинчен калать. Совет писатӗлӗсен аслисен те, ҫамрӑккисен те пӗр-пӗрне пулӑшса, йулташла кӑмӑллӑ пурӑнмала, тет. Пирӗн пурӑнӑҫ мӗнле аван—произведенисем те ҫавӑн пекех паха пулччӑр, тет.

Уйӑп Мишши тӑван чӗлхе пуйанлӑхне пӗлме кирли ҫинчен, аслӑ писатӗлсен хӑйсен опытне ҫамрӑксене парас пирки пичетре статйасем пама кирли ҫинчен калать.

Феодӑрӑв М. Ф. мӗн тени пулать вӑл вӗренес, тени? Ҫав ыйтӑва лартса ҫамрӑк ҫыракансене пуйан, паха шухӑшсем парӗ. Вӗренмеле. Тарӑн шухӑшлӑ пулмала пирӗн писатӗлсен.

Кӑлкан, Бачков, Стольаров ыттисем те ҫамрӑксене консультаци парас ӗҫ ҫителӗклӗ маррине асӑрхаттараҫҫӗ. Ҫамрӑксем вӗренесшӗн. Вӗренӳ кӗнекисем те кирлӗ, теҫҫӗ.

Пӗр сӑмахпа каласан, ҫамрӑк ҫыракансен сӑмаххисенче иртнӗ ҫулсенчи пек пирӗн сӑвӑсене пичетлемеҫҫӗ, пире ҫул памаҫҫӗ, кам Шупашкарта редакци сывӑхӗнче—ҫав сене ҫеҫ пичетлеҫҫӗ, тенӗ пушӑ айӑпсем илтӗнмеҫҫӗ халӗ. Пурте ытларах кӑтартусем пама ыйтаҫҫӗ. Пурте тимлӗн вӗренме тытӑннӑ, вӗренӳре пулӑшу ыйтаҫҫӗ. Ку ӗнтӗ хальхи ҫамрӑксен иртнӗ ҫултисенчен нумай ҫӳлте тӑнине кӑтартать. Пирӗн литературӑна шанчӑклӑ, пӗлӳ йенчен те ҫирӗп пултарулӑ йыш хутшӑннине кӑтартать. Ку питех те савӑнмали ӗҫ.

И. Д. Кузнецов йулташ Чӑвашобкомӗнчен, Петров й. йачӗпе ҫамрӑк ҫыракансене саламлать. Вӑл чӑваш ӗҫхалӑхӗ ӗлӗкхи саманара йепле хӗнхур тӳссе пусмӑрта пурӑнни ҫинчен, Октабӗрти револьуци ӑна ирӗке кӑларса хӑйӗн пултарулӑхне аталантарма ҫул уҫса пани ҫинчен калать.— Хальхи вӑхӑтра писатӗле литературӑра ӗҫлеме анлӑ ҫул уҫса панӑ. Пирӗн искусствӑ чечеклентӗр тесен, аван писатӗлсем вӗрентсе ҫитӗнтерме кирлӗ. Вӗренес ӗҫе вӑйлатмала,—тет вӑл.

Йулашкинчен Арк. Золотӑв канашлу пирӗншӗн мӗнле усӑлӑ, ӗҫлӗ иртнине, пирӗн ӗҫ ҫӗршыв пурнӑҫӗпе, клас кӗрешӗвӗпе, партипе ҫыхӑнса тӑмали ҫинчен, пирӗн большевикла идейлӑх, ҫивӗчлӗх пулма кирли ҫинчен калать.

Канашлу пит те усӑлӑ, ӗҫлӗ иртрӗ. Канашлура епӗр хамӑр ӳсӗмри ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене аван куртӑмӑр. Литературӑна кӗрекен ҫамрӑк йыша—вӑл йепле, мӗнле сывланине пӗлтӗмӗр, вӗсемпе ҫывӑхрах паллашрӑмӑр Парти Обкомӗ ҫамрӑк ҫыракансемпе ӗҫлесси ҫинчен йышӑннӑ постановлени хыҫҫӑн Чӑваш совет писатӗлӗсен Сойузӗ ҫине тӑрсах ку ӗҫе тытӑннине пӗлтерет канашлу. Литературӑ кадӑрӗсене хатӗрлесси Сойуз ӗҫӗнчи паллӑ вырӑнта тӑмала. Ку ӗҫе пур писатӗлсен те активлӑ хутшӑнса ӳссе пыракан ҫамрӑк ҫыракансене кулленхи ӗҫре аталанма, вӗренме пулӑшмала. Ҫамрӑксене ҫав пулӑшу питех те кирлӗ.

**Уйӑп М.**

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО № 196, 1935 г.

Ответственный редактор А. И. Золотов. Секретарь журнала В. О. Алагер. Технический редактор Н. С. Степанов.

Послано в производство 31-VII—1935 г. Подписано к печати 21-X—1935 г.

Уполномоченный Чувашглавлита № 1420. Тираж 1210 экз. Об'ем 5 л. Формат бумаги 62×94. Доля листа 1:8. Заказ № 1303.

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары, Канашская, 16.

Хакĕ 2 тенкĕ

## Журналта пурри:

Совет писателĕсен пултарулă ĕçĕшĕн . . . 1
Фридрих Енгĕлс *(статйа)* . . . . . . . . . 5
Фридрих Енгĕлс искусствăпа литературă çинчен 7
ЙЕНИК. Ромен Роллан Совет Сойузне килсе кайрĕ *(статйа)* . . . . . . . . . . . . . 9
„Мĕн пек телей çак тĕлĕнмеле çĕршывра“ *(А. М. Горйкипе Ромен Роллан „Пионер сасси“ редактăрĕ Орловă патне йанă çырусем)*. . . 10
ПОЛОРУССĂВ-ШЕЛЕПИ. Йубилей кунĕ *(сăвă)* 11
УХСАЙ ЙАККĂВĔ. Çĕр айĕнчи Мускав *(сăвă)* —
Арк. ĔÇХĔЛ. Тупсăм *(калав)* . . . . . . . . 12
УСМАН. Тигăр *(калав)* . . . . . . . . . 15
ТĂХТИ. Хурт-хăмăр калавĕсем . . . . . . . 20
ВАНИН Ф. Çамрăк сăвăçа *(сăвă)* . . . . . . 21
УСЛИ ВАÇЛЕЙĔ. Шурă тутăр *(сăвă)* . . . . —
ТĂХТИ. Атăл та куна халиччен курман *(ескиз)* 22
УХСАЙ ЙАККĂВĔ. Йурă *(сăвă)* . . . . . . . 24
ИЛПЕК Н. Ĕмĕт *(сăвă)* . . . . . . . . . . —
ДАНИЛĂВ М. Д. Чухăн Мĕтри *(йумах)* . . . . 25
ФЕДĂРĂВ М. Чăваш совет живопиç ÿсĕмĕн çулĕсем *(статйа)* . . . . . . . . . . . . . 29
Бруно Йаççенскипе Леонид Леонăв тата Анна Березин писателсем Шупашкарта . . . . . 35
УЙĂП МИШШИ. Çырма пуçлакансен канашлăвĕ *(статйа)* . . . . . . . . . . . . . 36

М. Ç. ÇПИРИДОНĂВ, Й. А. ЗАЙЦĔВ, Н. К. ÇВЕРЧКОВ, Д. Д. КОККĔЛ, Ф. ЛАВРЕНТЙĔВ, ТАГАЙĔВ-СУРПАН, А. МЕÇНИКОВ, В. МАКАРĂВ, А. Д. ДЕМИДĂВ тата ТОЛСТОВ художниксен Чăваш автономийĕ 15 çул тултарнă йатпа уçăлнă выстăвкăра пулнă картинĕсем.

Журнала çырăнса илĕр:

Х а к ĕ: çулталăка—12 тенкĕ;
6 уйăхлăха—6 тенкĕ;
3 уйăхлăха—3 тенкĕ.